24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941
ИЮНЬ
24
ЫТЛАРИКУН
146 (5861) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

*Большевиксен мухтавлă партийĕ тавра, Совет правительстви тавра,
аслă çулпуç Сталин юлташ тавра татах та тачăрах пĕтĕçер!*

Социализмлă тăван çĕршыв çине тапăннă ылханлă фашизма—вилĕм!

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. МОЛОТОВ юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмах

1941 çулти июнĕн 22-мĕш

Совет Союзĕнчи граждăнсемпе гражданкăсем!

Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ Сталин юлташ мана çакна пĕлтерме хушрĕç:

Паян, ирхине 4 сехетре, Совет Союзне нимĕнле претензисем те тăратмасăр тата вăрçă пуçлани çинчен пĕлтермесĕр, Германи çарĕсем пирĕн çĕршыв çине тапăннă, нумай вырăнсенче пирĕн чикĕсем çине атака тунă, пирĕн хуласем çине—Житомир, Киев, Севастополь, Каунас тата ытти хăшпĕр хуласем çине хăйсен самолечĕсем çинчен бомбăсем пăрахнă, çавăн чухне 200 çын ытла вĕлернĕ тата амантнă. Тăшман самолечĕсем çавăн пекех тата Румынипе Финлянди территорийĕсем çинчен те килсе тапăннă тата артиллерирен пенĕ.

Пирĕн çĕршыв çине çакăн пек ирсĕррĕн тапăнни цивилизациллĕ халăхсен историйĕнче халиччен курман ултав пулса тăрать. ССР Союзĕпе Германи хушшинче пĕр-пĕрин çине тапăнас марри çинчен договор тунă пулин те тата Совет Правительстви çак договорăн условийĕсене пурне те ырă кăмăлпа пурнăçа кĕртсе пынă пулин те, Германи пирĕн çĕршыв çине тапăнчĕ. Çак договор вăйра пулнă вăхăтра çав договора пурнăçлани тĕлĕшпе ССР Союзне Германи правительстви пĕр претензи те тăратма пултарайман пулин те, Германи пирĕн çĕршыв çине тапăнчĕ. Совет Союзĕ çине çакăн пек вăрă-хурахла тапăннишĕн пĕтĕмпех Германин фашистла правителĕсем ответлă пулса тăраççĕ.

Германи пирĕн çĕршыв çине тапăннă хыççăн çеç Германин Мускаври посолĕ Шуленбург ирхине 5 сехет те 30 минутăра хăйĕн правительстви ячĕпе мана, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне, çапла пĕлтерчĕ: Хĕрлĕ Çар чаçĕсене Германин хĕвелтухăçри чиккисем патне пухнă май, Германи правительстви ССР Союзне хирĕç вăрçăпа тухма йышăнчĕ, терĕ.

Çакăн çине ответлесе эпĕ Совет правительстви ячĕпе çапла пĕлтертĕм: Германи правительстви юлашки минутăччĕнех Совет правительствине нимĕнле претензи те тăратман, Совет Союзĕн мире юратакан позицине пăхмасăрах Германи СССР çине тапăнчĕ, çапла вара фашистла Германи тапăнакан енĕ пулса тăрать, терĕм.

Совет Союзĕн правительстви хушнипе эпĕ, çавăн пекех, çакна пĕлтерме тивĕç: пĕр пунктра та пирĕн çарсем тата пирĕн авиаци чикĕсене пăсни пулман, çавăнпа та паян ирхине Румынири радио Совет авиацийĕ Румынири аэродромсем çине пенĕ тесе пĕлтерни пĕтĕмпех суя сăмах тата провокаци пулса тăрать. Çавăн пекех ССР Союзĕпе Германи хушшинче тунă пакта Совет Союзĕ пурнăçламасть тесе, айăпламалли материала кая юлса та пулин хатĕрлеме хăтланакан Гитлерăн паянхи мĕнпур декларацийĕ те суя сăмах тата провокаци пулса тăрать.

Халĕ, Совет Союзĕ çине тапăннă хыççăн, çак вăрă-хурахла тапăнăва сирсе яма тата Германи çарĕсене пирĕн тăван çĕршыв территорийĕнчен хăваласа кăларма Совет правительстви хамăрăн çарсене приказ пачĕ.

Çак вăрçа пире Германи халăхĕ мар, Германири рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци мар илсе кĕчĕç,—вĕсем асап тӳснине эпир лайăх ăнланатпăр,—çав вăрçа пире Германин юншăн çунакан фашистла правителĕсен ушкăнĕ, французсене, чехсене, поляксене, сербсене, Норвегие, Бельгие, Дание, Голландие Грецие тата ытти халăхсене пусмăр айне тунă ушкăн илсе кĕчĕ.

Совет Союзĕн правительстви çакна шанса тăрать: Пирĕн паттăр çарпа флот тата Совет авиацин хăюллă соколĕсем хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи, совет халăхĕ умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртĕç тата агрессора аркатса тăкмалла çапса хуçĕç.

Иртĕнсе кайса тапăннă тăшмана хирĕç пирĕн халăх пирвайхи хут мар çапăçать. Хăй вăхăтĕнче, Россия çине Наполеон поход тунă чухне, пирĕн халăх отечественнăй вăрçă туса ответленĕ, вара Наполеон поражени тӳснĕ, пĕтсе ларнă. Пирĕн çĕршыва хирĕç çĕнĕ поход пуçаракан, мăнкăмăлланса кайнă Гитлерпа та çавăн пекех пулать. Хĕрлĕ çарпа пирĕн пĕтĕм халăх тăван çĕршывшăн, чыслăхшăн, ирĕклĕхшĕн халĕ те çĕнтерӳллĕ отечественнăй вăрçă туса пырĕç.

Совет Союзĕн Правительстви çакна çирĕппĕн шанса тăрать: пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăх, мĕнпур рабочисем, хресченсем тата интеллигенци, арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен обязанноçĕсене, хăйсен ĕçне тивĕçлĕ ăнланулăхпа туса пырĕç. Пирĕн пĕтĕм халăх халĕ нихăçанхинчен те пĕтĕçӳллĕ тата пĕрлĕхлĕ пулмалла. Хĕрлĕ Çар, Флот тата авиаци ыйтнисене пурнăça кĕртмешкĕн, тăшмана çĕнтермешкĕн пирĕнтен кашниех хăйне тата ыттисене те чăн-чăн совет патриотне тивĕçлĕ пек дисциплинăллă, организациллĕ пулма тата хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешме хушмалла.

Правительство сире, Совет Союзĕнчи граждансемпе гражданкăсене, пирĕн мухтавлă большевикла парти тавра, пирĕн Совет Правительстви тавра, пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ тавра хамăрăн ретсене татах та тачăрах пĕтĕçтерме чĕнет.

Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Тăшмана çапса аркатăпăр. Çĕнтерӳ пирĕнте пулĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн
УКАЗĔ
ССР Союзĕн уйрăм вырăнĕсенче вăрçăллă положени туса хурасси çинчен

СССР Конституцийĕн 49-мĕш статьин «п» пункчĕ тăрăх Архангельск облаçĕнче, Белорусс СС Республикинче, Вологда облаçĕнче, Воронеж облаçĕнче, Иваново облаçĕнче, Карело-Финн СС Республикинче, Калинин облаçĕнче, Краснодар крайĕнче, Крым АСС Республикинче, Курск облаçĕнче, Литва СС Республикинче, Латви СС Республикинче, Ленинград хулипе Ленинград облаçĕнче, Молдаван СС Республикинче, Мурманск облаçĕнче, Мускав хулипе Мускав облаçĕнче, Орел облаçĕнче, Ростов облаçĕнче, Рязань облаçĕнче, Смоленск облаçĕнче, Тула облаçĕнче, Украина СС Республикинче, Эстони СС Республикинче тата Ярославль облаçĕнче вăрçăллă положени туса хуни çинчен пĕлтерес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.
Мускав, Кремль. 1941 çулти июнĕн 22-мĕш.

СССР Верховный Совет Президиумĕн
УКАЗĔ
Ленинград çар округĕ, Прибалтика уйрăм çар округĕ, Хĕвеланăç уйрăм çар округĕ, Киев уйрăм çар округĕ, Одесса, Харьков, Орел, Мускав, Архангельск, Урал, Çĕпĕр, Приволжье, Çурçĕр Кавказ тата Закавказье çар округĕсем тăрăх военнообязаннăйсене мобилизаци тăвасси çинчен

СССР Конституцийĕн 49-мĕш статьин «л» пункчĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Ленинград çар округĕн, Прибалтика уйрăм çар округĕн, Хĕвеланăç уйрăм çар округĕн, Киев уйрăм çар округĕн, Одесса, Харьков, Орел, Мускав, Архангельск, Урал, Çĕпĕр, Приволжье, Çурçĕр-Кавказ тата Закавказье çар округĕсен территорийĕ çинче мобилизаци тăвасси çинчен пĕлтерет.

1905 çултан пуçласа 1918 çулта çуралнă военнообязаннăйсем мобилизациленеççĕ.

Мобилизацин пĕрремĕш кунĕ 1941 çулти июнĕн 23-мĕш тесе шутлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.
Мускав, Кремль. 1941 çулти июнĕн 22 мĕш.

СССР Верховный Совет Президиумĕн
УКАЗĔ
Вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенчи тата вăрçă ĕçĕсен районĕсенчи çар трибуналĕсем çинчен калакан Положенине çирĕплетесси çинчен

1. Вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенчи тата вăрçă ĕçĕсен районĕсенчи çар трибуналĕсем çинчен калакан Положенине çирĕплетес.

2. Вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенче тата вăрçă ĕçĕсен районĕсенче ĕçсене çар трибуналĕсем пăхса тухмалли йĕркене—çӳлте асăннă Положенин 11-мĕшпе 12-мĕш статьисенче палăртса хунă йĕркене ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ирĕк панă тăрăх ССР Союзĕн Юстици Халăх Комиссариачĕпе ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссариачĕ пĕрле кăларакан приказпа ĕçе кĕртеççĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июнĕн 22-мĕш.

Хĕрлĕ Çарăн Главнăй Командованийĕ 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче кăларнă
СВОДКА

1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче тул çутăлса килнĕ вăхăтра Балти тинĕсĕ патĕнчен Хура тинĕс патне çити тăсăлса выртакан фронтра Германи çарĕн регулярнăй войскисем пирĕн чикĕри чаçсене атакăланă, кăнтăрла çитиччен пирĕн чаçсем вĕсене малалла кайма памасăр чарса тăнă. Кăнтăрла иртнĕ хыççăн Германи войскисем Хĕрлĕ Çарăн полевой войскисен малти чаçĕсемпе тĕл пулнă. Хаяр çапăçусем хыççăн противнике, пысăк çухатусем кӳрсе, каялла хăваласа янă. Гроднопа Кристынополь енĕсенче кăна противнике тактикăллă пысăк мар çитĕнӳсем тума тата **Кальвария, Стоянув** тата **Цехановец** местечкисене йышăнса илме май килнĕ. Кальварипе Стоянув чикĕ патĕнчен 15 километрта, Цехановец—10 километрта.

Противник авиацийĕ пирĕн чылай аэродромсене тата халăх пурăнакан пунктсене атакăланă, анчах пур çĕрте те ăна пирĕн истребительсемпе зенитнăй артиллери татăклă отпор панă, противнике пысăк çухатусем кӳнĕ. Эпир противникăн 65 самолетне персе антарнă.

СССР Верховный Совет Президиумĕн
УКАЗĔ
Вăрçăллă положени çинчен

1. СССР Конституцийĕн 49-мĕш статьин «п» пункчĕ тăрăх ССР Союзĕн оборона интересĕсемшĕн тата обществăллă йĕркелĕхпе государство хăрушсăрлăхне туса хурассишĕн уйрăм вырăнсенче е пĕтĕм ССР Союзĕ тăрăх вăрçăллă положени туса хураççĕ.

2. Вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенче оборона ĕçĕнче, обществăллă йĕркелĕхпе государство хăрушсăрлăхне туса хурас ĕçре государство влаçĕн оргăнĕсен мĕнпур функцийĕсене фронтсен, çарсен, çар округĕсен çар совечĕсем, çар совечĕсем çук çĕрте — войскăсен соединенийĕсен высший командованийĕ туса пыраççĕ.

3. Вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенче çар влаçĕсен (2-мĕш пункт) çакăн пек право пур:

а) Хальхи вăхăтри законсем тата правительство йышăннă постановленисем тăрăх граждăнсене оборона ĕçĕсене тума, çыхăну çулĕсене, сооруженисене, çыхăну средствисене, электростанцисене, электросетьсене тата ытти кирлĕ объектсене сыхлама, пушарсене, эпидемисене тата стихийăллă инкек-синкексене хирĕç кĕрешме ĕçлев повинноçне хутшăнтарма;

б) çар чаçĕсемпе учрежденийĕсене вырнаçтарса тухмашкăн военно-квартирнăй обязанность тума;

в) вăрçă ĕçĕсем валли ĕçлев повинноçĕпе автогужевой повинность тума;

г) транспорт средствисене тата оборона нушисем валли кирлĕ пурлăха государствăллă, обществăллă тата кооперативлă предприятисемпе организацисенчен, çавăн пекех уйрăм граждăнсенчен транспорт средствисене тата оборона нушисем валли кирлĕ ытти пурлăхсене илме;

д) учрежденисемпе предприятисен, вăл шутрах театрсен, киносен тата ыттисен ĕç вăхăчĕсене йĕркелесе пыма; мĕнпур йышши пухусем, шествисем тата ыт. организацилессине йĕркелесе пыма; пĕр паллă вăхăт хыççăн урамсене тухма чарма, урамри движенине чакарма, çавăн пекех тата кирлĕ тĕлсенче ухтарусем тума тата иккĕлентерекен çынсене тытса чарма;

е) суту-илĕве тата суту-илӳ организацийĕсен (рыноксен, магазинсен, складсен, обществăллă питани предприятийĕсен), коммуналлă предприятисен (мунчасен, прачечнăйсен, парикмахерскисен тата ыттисен) ĕçĕсене йĕркелесе пыма, çавăн пекех тата халăха продовольстви таварĕсемпе промышленность таварĕсем памалли нормăсене туса çирĕплетме;

ж) вăрçăллă положени туса хунă вырăнсене пырса кĕмешкĕн тата вĕсенчен тухса каймашкăн чарма;

з) хăйсен преступлениллĕ ĕçĕсемпе, çавăн пекех преступлениллĕ çынсемпе çыхăнусем тытнипе халăха сиен кӳрекенсем тесе йышăннă çынсене вăрçăллă положени туса хунă вырăнтан, е унăн уйрăм пункчĕсенчен административлă йĕркепе кăларса яма.

4. Çак Указăн 3-мĕш пунктĕнче палăртнă мĕнпур ыйтусем тăрăх çар влаçĕсен çакна тума право пур:

а) Пĕтĕм халăхшăн обязательно пулса тăракан постановленисем кăларма, çав постановленисене пурнăçа кĕртменшĕн ултă уйăхлăха тĕрмене хупса лартса е виçĕ пин тенке çити штраф тӳлеттерсе административлă йĕркепе наказанисем пама;

б) влаçăн вырăнти оргăнĕсене, государствăллă тата обществăллă учрежденисене тата организацисене распоряженисем пама, çав распоряженисене пĕр сăмахсăрах тата çийĕнчех пурнăçа кĕртмешкĕн хушма.

5. Государство влаçĕн вырăнти мĕнпур оргăнĕсен, государствăллă, обществăллă учрежденисен, организацисен, предприятисен çĕршыв оборонин нушисем валли тата обществăллă йĕркелĕхпе хăрушсăрлăх тытса тăмашкăн ça вырăнти вăйсемпе тата средствăсемп усă курма çар командованине пĕтĕ вăйпа пулăшмалла.

6. Çар влаçĕсен распоряженийĕсемп приказĕсене пăхăнманшăн, çавăн пеке вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенче преступленисем тунăшăн айăплисене вăрçă чухнехи законсем тăрă уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ.

7. Вăрçăллă положени туса хунă вырăнсенче тунă уголовнăй ĕçсене—оборонăна, обществăллă йĕркелĕхе тат государство хăрушсăрлăхне хирĕç пыракан уголовнăй ĕçсене судсем пăхс тухасси çинчен кăларнă, вăйра тăрака правилăсене пăрахăçа кăларса, вĕсен пăхса тухма çар трибуналĕсене пара çĕ, уйрăмăн илсен:

а) государствăллă преступлени çинчен пуçарнă ĕçсене;

б) обществăллă (социализмлă) ха пăрлăха сыхласа усрасси çинчен 19 çулти августăн 7-мĕшĕнче кăларнă з кон тăрăх пăхнă преступленисем çи чен пуçарнă ĕçсене;

в) çар служащийĕсем тунă престу ленисем çинчен пуçарнă мĕнпур ĕ сене;

г) вăрă-хурахла ĕçсем çинч (РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 167-мĕ ст. тата союзлă ытти республикăс УК тивĕçлĕ статьисем) пуçарнă ĕçсен

д) пĕр-пĕр паллă тĕллевпе вĕлерн сем çинчен (РСФСР Уголовнăй Коде сĕн 136—138-мĕш статьисем тата союз ытти республикăсен Уголовнăй Коде сĕн тивĕçлĕ статьисем) пуçарнă ĕ ссне;

е) хупса лартмалли çуртсенчен та хуралласа тăнă çĕртен вăйпа тух тарни çинчен пуçарнă ĕçсе (РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 81-мĕ статьи тата союзлă ытти республик сен Уголовнăй Кодексĕсен тивĕç статьисем);

ж) пурне те тивĕç çар обязанноç чен пăраннă пирки пуçарнă ĕçсе (РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 68-м статьи тата союзлă ытти республик сен Уголовнăй Кодексĕсен тивĕç статьисем) тата влаçăн представите сене хирĕç тăнă пирки пуçарнă ĕçсе (РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 73, тата 73^2-мĕш статьисем тата союз ытти республикăсен Уголовнăй Код сĕсен тивĕçлĕ статьисем);

а) хĕçпăшала законсăр сутăн ил сутнă тата тытса усранă пирки п çарнă, çавăн пекех хĕçпăшала вăрла çинчен пуçарнă ĕçсене (РСФСР У ловнăй Кодексĕн 164а, 166а тата 1 мĕш статьисем тата союзлă ытти р публикăсен Уголовнăй Кодексĕсен т вĕçлĕ статьисем).

Кунсăр пуçне, çар влаçĕсене спе ляци туни, усал шухăшпа хулиган ĕçсем туни тата союзлă республикăс Уголовнăй Кодексĕсем тăрăх пăхнă ти преступленисем çинчен пуçарнă сене пăхса тухма, командовани вăрç лă положени обстоятельствисем тă çакна тума кирлĕ тесе йышăнать п сан, çар трибуналĕсене пама право раççĕ.

8. Çар трибуналĕсенче ĕçсене «Вă пыракан районсенчи çар трибуналĕ çинчен калакан Положенипе» палăр правилăсем тăрăх пăхса тухаççĕ.

9. Çар трибуналĕсем йышăннă п говорсене кассацине йышăнмаççĕ, вĕ не надзор йĕркипе кăна пăрахăçа ларма е улăштарма пултараççĕ.

10. Çак Указ чрезвычайнăй обст тельствăсене пула ССР Союзĕн го дарство влаçĕн тата государство равленийĕн вырăнти оргăнĕсем вырăнсенче те пурнăçа кĕрет.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июнĕн 22-мĕш.

Тăван çĕршыва сыхлама

ОРИНИНО (Сĕнтĕр р.), июнĕн 22-мĕш. **(Телефонпа).** СССР Совнарком председателĕн заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ радио тăрăх тухса каланине итленĕ хыççăнах «Красное Сормово» колхозра митинг пулса иртнĕ. Вăл митингра колхоз председателĕ А. Моисеев юлташ тухса сăмах каланă.

— Фашистла мерзавецсем, — тенĕ Моисеев юлташ,—халиччен историре пулман ирсĕр ĕç турĕç, вĕсем вăрçă пуçлани çинчен пĕлтермесĕрех Совет Союзĕ çине вăрçăпа килсе тухрĕç.

Молотов юлташ, правительство т пирĕн çулпуç Сталин юлташ хушни совет халăхне тăван çĕршывшăн решме чĕнчĕ.

Эпĕ хамăн ирĕкпе Хĕрлĕ Çар ре кайма ыйтса заявлени патăм, райво коматран мана хальтерех çар ча ăсатма ыйтатăп.

Моисеев юлташ хыççăн хăйсен и кĕпе Хĕрлĕ Çар ретне кайма ый Ястребов, Смирнов, Толстов, Трофим Иванов т. ыт. пурĕ 12 çын заявлени панă.

Кашни харпăрхăй вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлесе, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара фронтра çĕнтерӳ тума пулăшар!

☆ ★ ☆

Çĕршыва сыхлассишĕн пĕр тумлам юн юлмиччен кĕрешетпĕр

ШАХАСАН, июнĕн 22-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районри коммунистсен пухăвĕ пыратчĕ. СССР Совнарком Председателĕн Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ радио тăрăх каланă сăмаха илтсен, коммунистсем хăйсен вырăнĕсенчен тăчĕç.

— Фашистла ирсĕрсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерер!

— Пурте пĕр çын пек пулса, юратнă çĕршыва тăшманран сыхлама тухар!

Тата ытти сасăсем те илтĕнеççĕ залра.

— Пирĕн задача—ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене отлично ирттересси тата пĕтĕм ялхуçалăх культурисене вăхăтра пухса кĕресси. Çакна пурнăçа кĕртсен, эпир хамăр тăван çĕршыв вăй-хăватне татах та ытларах çирĕплететпĕр,—тет Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Якимов юлташ.

Ун хыççăн трибуна çине çамрăк коммунист Гущин юлташ тухса тăрать.

— Большевиксен партийĕ тата пирĕн çулпуçĕ Сталин юлташ чĕнсессĕн, эпир пурте пĕр çын пек пулса тăван çĕршыва сыхлакансен ретне тăрăпăр, фашистла çăхансенчен хамăр çĕршыва сыхлассишĕн пĕр тумлам юн юлмиччен кĕрешĕпĕр,—терĕ вăл.

Коммунист-колхозник Александров юлташ çапла каларĕ:

— Эпир хамăр тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партине тата Сталин юлташа пĕтĕм чĕререн юрататпăр. Нумай миллионлă совет халăхĕ иртĕнсе кайнă фашистсене аркатса тăкасса эпир шансах тăратпăр.

Пуху пĕр кăмăллă пулса резолюци йышăнчĕ. Коммунистсем хамăр тăван çĕршыва тăшманран сыхлама пулчĕç.

Г. ЗАХАРОВ.

ВКП(б) Шăхасан райкомĕн секретарĕ.

Пин çынлă митингра

ЭЛĔК, июнĕн 22-мĕш. **(Телефон тăрăх, хамăр корр.).** Элĕк ялсоветне кĕрекен ĕççыннисен пысăк митингĕ пулса иртрĕ. Митинга ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Семенов юлташ уçрĕ. Молотов юлташ радио тăрăх каланă сăмах çинчен пĕлтерсе, вăл районри ĕççыннисене тăван çĕршывшăн тата Хĕрлĕ Çар вăй-хăвачĕшĕн тăрăшса ĕçлеме чĕнчĕ. Ун хыççăн Элĕк вăтам шкулĕнчи вăтă учительница М. Андреева хумхануллă сăмах каларĕ.

— Молотов юлташ каланă сăмахсене илтсен, пĕтĕм чĕререн хумхантăм. Эпĕ тăван Хĕрлĕ Çара пулăшма яланах хатĕр. Нумаях та пулмасть, Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заема 680 тенкĕлĕх çырăнтăм. Çав заем укçине халех тӳлесе тататăп, сире те çавăн пек тума чĕнетĕп.

Ун хыççăн учительница П. Петрикова сăмах каларĕ.

— Тăшмана тĕпренех аркатмалла, пирĕн çĕршывăн вăй-хăвачĕ çирĕп. Пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çар пур, эпир тăшмана çĕнтерме пултаратпăр. Эпир—çĕнтерекен халăх. Эпир, хĕрарăмсем, арçынсем вырăнне юлса Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса тăрассишĕн пĕтĕм вăй-халпа ĕçлĕпĕр.

Сывă пултăр Сталин юлташ!

Тĕп пултăр ылханлă фашизм!

Митинг резолюци йышăнчĕ. Вăл тăван çĕршыв вăй-хăватне татах та çирĕплетсе пыма, Хĕрлĕ Çар хăватне çирĕплетессишĕн çине тăрса ĕçлеме пулчĕ.

Хĕрлĕ Çара пулăшар

ВĂРНАР, июнĕн 22-мĕш. **(Телефонпа).** Паян колхоз председателĕсем, бригадирсем, агротехниксем тата специалистсем 300 çын ытла Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхоза çураки ĕçĕсен итогĕсене, тырпулсене уйран пухса кĕртес тата ялхуçалăх продуктисем хатĕрлес тĕлĕшпе тăракан задачăсене сӳтсе-явма пухăннă.

Трибуна çинче — Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ С. К. Коротков юлташ. Вăл канашлу участникĕсене иртĕнсе кайнă фашистла вăрă-хурахсем пирĕн тăван çĕршыва, совет халăхне хирĕç ирсĕр ĕç пуçлани çинчен пĕлтерет.

Коротков юлташ колхозниксене пурне те тăшманăн ирсĕр ĕçне хирĕç ответлесе, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме, вăйлă тырпулшăн татах та тимлĕнрех кĕрешме, тăван çĕршыва сыхлама кашни минутăрах хатĕр тăма чĕнчĕ.

Ун хыççăн ВКП(б) райком секретарĕ Сергеев тата ытти юлташсем тухса сăмах каларĕç. Канашлу çавтери пысăк çĕкленӳпе резолюци йышăнчĕ. Вăл резолюцире совет правительствин тулашри политикине тата вăл йышăннă ĕçсене ырланă тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ Флочĕн боевой ялавĕсен айĕнче хамăрăн аслă тăван çĕршыва çирĕп кăкăрпа сыхлама яланах хатĕр тăни çинчен каланă.

— Эпир Ленинăн — Сталинăн геройла партийĕ, Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ, çулпуç, тус, учитель аслă Сталин тавра татах та çирĕпрех пĕтĕçетпĕр, тенĕ резолюцире.

Производствăра стахановла ĕçлесе Хĕрлĕ Çара пулăшар!

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, июнĕн 23-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районри колхозсенче тата учрежденисенче ĕççыннисен митингĕсем пулса иртеççĕ. Колхозниксен митингĕнче 1000 çын ытла пулнă. Колхозниксем пурте пĕр çын пек пулса йышăннă резолюцире çапла каланă:

— Пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине тапăннă фашистла ирсĕрсене çапса аркатма, Хĕрлĕ Çар вăйне çирĕплетме предприятире, колхозра тӳрĕ кăмăлпа, стахановла ĕçлени кирлĕ.

Тĕп пултăр фашизм!

Çĕнтерӳ пирĕнте пулать, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара никам та çĕнтерес çук!

Сывă пултăр аслă Сталин юлташ!

Тăван çĕршыв патриочĕсем

ÇĔРПӲ, июнĕн 23-мĕш. **(Телефонпа).** Районри предприятисемпе колхозсенче ĕççыннисен митингĕсем пулса иртеççĕ. Июнĕн 22-мĕшĕнче колхозсенчи митингсенче 3711 çын пулнă, хулари митингра 3500 çын пулчĕ. Правительство чĕнни çине ответлесе, нумай ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара илме ыйтса заявленисем параççĕ. Ялхуçалăх техникумĕнче хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара кайма кăмăл тунă юлташсем чылай. Воробьев юлташ митингра хĕрӳллĕ сăмах тухса каланă, хăйне Хĕрлĕ Çара илме ыйтнă.

Хулари митингра партин райкомĕн секретарĕ Скворцов, военком Петров т. ыт. юлташсем те тухса каланă. Митинг мĕнпур ĕççыннисене дисциплинăллă пулма, производствăллă плансене ытлашшипех тултарма, çапла вара Хĕрлĕ Çар хăватне ӳстерсе пыма чĕнсе резолюци йышăннă.

Советпа парти активĕ СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указсене ăнлантарса пама ялсене тухса кайнă.

В. ФАДЕЕВ.

ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

Фашистла бандитсене çирĕп ответ

ЕНЕР, июнĕн 23-мĕшĕнче, ирхине 9 сехетре, Шупашкарти Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи рабочисемпе, работницăсен, служащисен тата инженерно-технически работникĕсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн инструкторĕ Асафьев юлташ СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ июнĕн 22-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмах тата правительство палăртнă ĕçсем çинчен пĕлтерчĕ.

Асафьев юлташ хыççăн работница А. Орлова, комбинат директорĕ Семенко, работница Михайлова т. ыт. юлташсем те тухса каларĕç.

А. Орлова юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Паян эпĕ ĕçе киличчен хамăн упăшкана Хĕрлĕ Çар ретне фашистла [illegible] çапса аркатма ăсатрăм. Упăшкана эпĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче хĕç-пăшала хыттăн тытса, пирĕн телейлĕ тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăннă ирсĕр фашистсене ним юлмиччен çапса аркатма наказ парса ятăм. Эпир комбинатра тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне куллен ӳстерсе пырса, тăван Хĕрлĕ Çара пулăшу паратпăр.

Митингра пулнă 200 çын пĕрсаслăн пулса çакăн пек резолюци йышăнчĕ:

«Эпир, Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи рабочисемпе работницăсем, служащисем тата инженерно-технически работниксем, Ленин—Сталин партийĕ тавра пĕтĕçсе фашистла Германин ирсĕр провокацине хирĕç хамăр производствăра ĕç тухăçлăхне татах та ӳстернипе ответлетпĕр. Кирлĕ пулсан, пурте пĕр çын пек пулса, хамăрăн аслă тăван çĕршывăн чиккисене сыхлама каятпăр».

Харăссăн тухатпăр çĕкленсе

Пӳтсĕр чее йытă ним вĕрмесĕр
Йăпшăнса тухать те хушăкран,
Çын çине сасартăк, систермесĕр,
Урнă евĕр тапăнать хыçран.

Тĕнчере хальччен пулман киревсĕр,
Намăссăр, кĕççепит фашистсем
Иртĕхеççĕ урнă йытă евĕр,
Çирĕммĕш ĕмĕр ятне çĕртсе.

Мĕнтери асап, мĕн чухлĕ хурлăх
Кӳчĕçĕ этемлĕхе вĕсем!
Çĕр çинчи пур халăха вут-çулăм
Хушшине пăрахрĕç, варвăрсем.

Мĕнтенпе çав сĕмсĕр сысна Гитлер
Хăйĕн вилшăршиллĕ сăмсине
Ултавпа, хĕçпе те икĕ-питлĕн
Тек чикесшĕн Совет пахчине.

Çук, пулаймĕ, чунилли, пулаймĕ
Пирĕн çĕршывран çăва тума!
Ирĕк халăх пусмăра пуçтаймĕ,
Вăл пĕлет хăйне сума-сума.

Вăл пĕлет тăшмансене хаяррăн,
Аслати пек çапса аркатма.
Эс те Бексем пекех тухса тарăн,
Анчах вырăн пулмĕ пытанма.

Юлашки вăрçа эпир хăюллăн,
Харăссăн тухатпăр çĕкленсе.
Çĕр çинче талккишпех Совет пулĕ,
Унта юлмĕç тискер фашистсем.

А. КĂЛГАН

Халăх тарăхăвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 22-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Паян, июнĕн 22-мĕшĕнче, Красноармейски район центрĕнче ярмăркăна пухăннă ĕççыннисен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра ВКП(б) Красноармейски райкомĕн секретарĕ Сахалкин юлташ, Германи войскисем Совет Союзĕн чиккисем çине тапăнса тата пирĕн хуласем çине бомбăсем пăрахса, Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтерчĕ. Çак хыпара итленĕ хыççăн, митинга пухăннă халăх çав тери хытă тарăхса хумханчĕ. Германири фашистла пуçлăхсене хирĕç кĕрешме хăйсем хатĕр тăни çинчен пĕлтерчĕ, производствăра нихăçанхи пек мар хĕрӳллĕн ĕçлеме, дисциплинăллă пулма сăмах пачĕ. Ленин — Сталин партийĕ тавра татах та тачăрах пĕтĕçме пулчĕ.

П. МАЙОРОВ,
А. ФЕДОРОВ.

Эпир çĕнтеретпĕрех

Шупашкар хулинчи осоавиахимовецсем ĕнер тактикăллă вĕренĕве тухрĕç. Заняти хĕрсе пынă вăхăтра ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Федоров юлташ командăй состава, вара вĕренӳре пулнă осоавиахимовецсене Германи фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Этем историйĕ кун пек тискерлĕхе нихăçан та курман. Германи фашисчĕсем Франци, Бельги, Голланди, Греци тата Европăри ытти халăхсене пусмăра кĕртсе ӳкерсе, вĕсен ӳт-пĕвĕсем урлă утса тухса, темиçе çĕршер пин ĕççыннисене, ача-пăчасене, хĕрарăмсене вĕлерсе çĕре этем юнĕпе витсе, пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине, мирлĕ пурăнакан совет халăхĕ çине тискеррĕн вăрă-хурахла тапăнчĕç.

Камăн чĕри чăтĕ çак тискерлĕхе! Совет халăхĕ, унăн мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ, Тинĕс-Çар Флочĕ, Сывлăш-Çар Флочĕ пĕрре кăна мар тăшмана ним юлмиччен çĕмĕрсе тăкрĕç. Халĕ те çак çапăçура, тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, хамăрăн чысшăн пыракан çапăçура, пирĕн халăх, унăн хăватлă Хĕрлĕ Çарĕ çĕнтеретех.

Осоавиахимовецсем вĕренӳрен хулана таврăнсан кĕске митинг пулса иртрĕ. Митингра ВКП(б) Чăваш обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Пирĕн тăван çĕршыв çине Германи фашисчĕсем тапăнчĕç. Эпир çакна пĕлетпĕр: Германи рабочийĕсем, ĕçхресченĕсем тата ĕç интеллигенцийĕ пирĕн халăха хирĕç çапăçасшăн мар. Вĕсене фашистсем ирĕксĕрлесе вăрçа кĕртрĕç.

Пирĕн халăх хăйĕн историйĕнче пĕрре кăна мар хăрушлăх умĕнче пулнă, çав хăрушлăхра вăл яланах пĕрлĕхлĕ пулса тăшмана хирĕç хăюллăн тăнă, пурнăçа хĕрхенмесĕр çапăçнă, кĕрешнĕ. Çак кĕрешӳсенче пирĕн халăх пĕрмаях çĕнтернĕ.

Совет правительстви панă приказ тăрăх Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ, сталинла соколсем тăван çĕршыв территорийĕнчен тăшмана — фашистла бандитсене çапа-çапа сирпĕтĕç, тăшмана ним юлмиччен аркатса тăкĕç.

Юлашкинчен Ахазов юлташ çапла каларĕ:

— Юлташсем! Эпир çĕнтеретпĕр. Пурте хамăр ĕç вырăнĕнче тухăçлăн, хастарлăн ĕçлер. Хĕрлĕ Çара мĕн кирлĕ, пурне те ытлăн-çитлĕн парса тăрар. Ĕçре дисциплинăллă пулар. Халĕ пирĕн совет правительстви тавра Сталин юлташ тавра нихăçанхинчен те çирĕппĕн пĕтĕçсе тăмалла, пĕрлĕхлĕ пулмалла.

☆ ★ ☆

Фашистла вăрă-хурахсене хаяррăн çĕмĕрсе тăкăпăр

КИЕВ, июнĕн 22-мĕш. (ТАСС). ССР Союзĕн Совнарком Председателĕн Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха Киеври пиншер ĕççыннисем пысăк тимлĕхпе итленĕ. Фашистла вăрă-хурахсем пирĕн çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăнни, Гитлер войскисем совет çĕрĕн таса чиккисене пăсни халăх массисене вĕçĕ-хĕррисĕр çиллентерсе тарăхтарнă. Киеври заводсенче, фабрикăсенче, учрежденисенче нумай митингсем пулса иртнĕ. Рабочисемпе инженерсем, служащисем, ученăйсем—пурте пĕр çын пек пулса юратнă тăван çĕршыва хӳтлемешкĕн хатĕр тăни çинчен калаççĕ. Вĕсен сăмахĕсенче пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине алă çĕклеме хăйнă фашизма, ирсĕр тăшмана хирĕçле курайманлăх туйăмĕ тапса тăрать. Митингсем совет патриотизмне, ĕççыннисем партипе совет правительстви тавра, Сталин юлташ тавра тачă, хурçă пек çирĕп пĕтĕçсе тăнине кăтартса паракан хăватлă демонстраци пулса тăнă.

Машинăсем тăвакан «Большевик» заводăн пĕтĕм коллективĕ цехсенчи митингсене пухăннă. Чугунолитейнăй цехра мастер Милашов юлташ сăмах тухса каланă:

— Эпир тĕнчере халиччен никам илтмен ултава курнă свидетельсем пулса тăратпăр,—тенĕ вăл,—асса кайнă тăшман пирĕн чикĕсем çине тапăнчĕ, хăйĕн юнпа хĕрелнĕ аллине Совет Союзĕ çине çĕклеме хăйрĕ. Нимĕç фашисчĕсем историне начар пĕлеççĕ пулас! Вĕсем Россия уйхирĕсенче Наполеон хăйĕн мăйне хуçни çинчен, Советлă Украина уйхирĕсенче кайзерла Германи войскисене тата ытти оккупантсене мĕнле çĕмĕрсе тăкни çинчен маннă. Çак уроксем çителĕксĕр пулас! Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ, пĕтĕм совет халăхĕ асса кайнă агрессорсене çăварлăхлама пĕлĕç.

Тухса калакансен сăмахĕсенче çĕнтерӳ патне пырас кăмăл вĕçĕ-хĕррисĕр çирĕп пулни, совет хĕçпăшалĕн хăватлă вăйне, тăшмана çĕмĕрсе тăкассине çирĕппĕн шанса тăни янăраса илтĕннĕ.

Сталин ячĕпе тăракан заводра, «Ленинская кузница» заводра, орденлă машиностроительнăй заводра тата Украина столицинчи ытти предприятисенче нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ. Пур çĕрте те çиллесе тарăхнă халăхăн—социализмлă тăван çĕршыв çине алă çĕкленĕ тăшмана нимĕн хăвармиччен çĕмĕрсе тăкас çирĕп кăмăлпа хавхаланса çĕкленнĕ халăхăн тăшманшăн хăрушă сасси кĕрлесе тăнă.

Районсемпе хуласенчи военкоматсене рабочисенчен, совет интеллигенцийĕн представителĕсенчен пиншер заявленисем пыраççĕ, вĕсем доброволецсем пулса фронта каясшăн.

Ирĕклĕ Советлă Латвире

РИГА, июнĕн 22-мĕш. (ТАСС). Паян ирĕклĕ Латвин хуласемпе ялсенче нумай çынлă митингсем—совет патриотизмĕн чĕрене хумхантаракан демонстрацийĕсем пулса иртнĕ. Çав митингсенче тухса каланă рабочисем, хресченсем тата служащисем хăйсен социализмлă тăван çĕршывне кăкăрпа хӳтлеме хатĕр тăни çинчен каланă.

«Красный квадрат» заводри рабочисен митингĕнче заготовочнăй цехри работница Лесковская юлташ сăмах илнĕ.

— Пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе,—тенĕ вăл,—эпир тăван çĕршыв умĕнчи таса тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртĕпĕр.

«Большевичка» фабрикăри рабочисем тăван çĕршыва пурте пĕр шухăшлă пулса хӳтлеме хатĕр тăнине кăтартса панă. Пĕр саслă пулса йышăннă резолюцире вĕсем çапла каланă:

«Хăйĕн ирсĕр тапăнăвĕпе Германири фашистла клика хăйĕн тахçанхи ĕмĕчĕсене—пирĕн çĕршыва туртса илес шутлă ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртесшĕн. Анчах вăл нихăçан та пулас çук—Хĕрлĕ Çар фашистла вăрă-хурахсене çĕмĕрсе тăкмаллах отпор пама пултарать. Эпир пурсăмăр та, пĕр çын пек пулса, хамăрăн юратнă тăван çĕршыва хӳтлеме тăрăпăр, станоксемпе машинăсем умĕнче татах та ытларах вăй хурса ĕçлĕпĕр, вăрçăллă положени ыйтакан социализмлă дисциплинăна çирĕппĕн пăхăнса тăрăпăр».

Прибалтикăри Уйрăм Çар округĕн чаçĕсемпе подразделенийĕсенче митингсем пулса иртнĕ.

— Фашистла заправилăсем пирĕн чикĕсем çине вăрă-хурахла тапăнчĕç,—тенĕ Н-ски чаçри красноармеец Наумов юлташ.—Çак ирсĕр провокаци Гитлершăн хакла ларĕ. Хĕрлĕ Çар тăшман çапнине хирĕç ответлесе виçĕ хут вăйлăрах аркатса тăкмалла çапма хăнăхнă.

Митингра сăмах илсе, Н-ски чаçри красноармеец Гогоберидзе юлташ çапла каланă:

— Германи захватчикĕсем вырăс халăхĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнмасăр пурăнмалли положенийĕ çине пĕр хут çеç мар алă çĕкленĕ. Анчах вĕсем çапла хăтланнисем пурте пĕрмаях аркана-аркана кайнă. Нумай ĕмĕрсем ĕлĕкрех Чудский кӳлĕн пăрĕ çинче геройла вырăс халăхĕ нимĕçсен йытă-рыцарĕсене çĕмĕрсе тăкнă. XVIII ĕмĕрте 7 çула пынă вăрçăра геройла вырăс халăхĕ Берлина туртса илнĕ. 1918 çулта Совет Союзĕнчи халăхсем Германи оккупанчĕсене пирĕн тăван çĕршывăн чиккисем леш енне кăларса ывăтрĕç. Асса кайнă фашистла пуçкасансене халĕ те çавăн пекех çĕмĕрсе тăкăпăр.

Çĕнтерӳ пирĕнте пулать

МУСКАВ УЙРĂМ ÇАР ОКРУГĔ, июнĕн 22-мĕш. (ТАСС). СССР Совнарком Председателĕн Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха Н-ски чаçри боецсем, командирсем тата политработниксем калама çук пысăк тимлĕхпе итленĕ. Çакăнтах çуллахи лагерĕн площадкисем çинче митингсем пуçланнă. Тухса калакансен сăмахĕсенче пуринче те фашистла заправилăсене хирĕçле пĕтĕм чĕререн килекен тарăхупа çилĕ туйăмĕ, хамăрăн социализмлă тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратнин туйăмĕ тапса тăнă.

— Германи империализмĕ ирсĕррĕн килсе тапăннине хирĕç,—тенĕ политрук заместителĕ Зайцев юлташ,—совет халăхĕ çĕмĕрсе тăкмалла хаяррăн çапнипе ответлĕ. Тĕнчери социализмлă пĕртен-пĕр государствăн граждăнĕсем пурте пĕр шухăшлă пулса хăйсен мирлĕ ĕçне хӳтлеме тухĕç. Пирĕн летчиксемпе моряксем, пехотинецсемпе кавалеристсем, артиллеристсемпе танкистсем ирĕклĕхшĕн, социализмлă тăван çĕршывшăн, аслă Сталиншăн пĕтĕм чĕрене, пĕтĕм вăй-хала хурса çапăçĕç.

Митингсем пĕтнĕ хыççăнах чаçăн личнăй составĕ хăйĕн служба вырăнĕсем тăрăх саланнă. Тăшманшăн хăрушă боевой техникăна çапăçу валли пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитернĕ.

— Çак вăрçă,—теççĕ боецсем,—пирĕн никам пырса тĕкĕнмелле мар чикĕсем çине алă çĕклеме хăйнă Германи фашизмне пĕтерсе тăкмалли вăрçă пулĕ.

Пĕтĕм халăхпа алла-алăн тытăнса

Германири фашистла правительсем пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывĕ çине—Совет Союзĕ çине тапăнчĕç. Икĕ çĕршыв хушшинче тунă договора пăсса, вĕсем вăрçă пуçлани çинчен пĕлтермесĕрех пирĕн çĕршыври мирлĕ хуласем çине бомбăсем пăрахма пуçларĕç.

Вăрçăна эпир пуçламан. Хăйсен халăхне тата ытти халăхсене чуралăха персе чикнĕ фашистла варварсен ушкăнĕ, ирĕклĕхпе прогресс тăшманĕсем Совет Союзне хирĕç поход пуçларĕç. Пирĕн пĕтĕм халăх—рабочисем, служащисем, колхозниксем, интеллигенци асса кайнă тăшмана алла-алăн тытăнса отпор парĕç, ăна çĕмĕрсе тăкĕç.

Советсен çĕршывĕн таса çĕрне хӳтлесе, эпир социализмлă революци çĕнтерсе илнисене, малта пыракан наукăна, прогреса, ирĕклĕхе хӳтлетпĕр. Эпир çынна курайман фашизма, тискер чарусăр варварсене отпор паратпăр. Паян совет интеллигенцийĕ большевикла партине, совет правительствине, аслă Сталина хăйĕн çулăмлă патриотла туйăмĕсем çинчен, хăйĕн пĕтĕм вăйне, пĕлӳлĕхĕсене, кирлĕ пулсан хăйсен пурнăçне те тăван çĕршыва хӳтлес ĕçшĕн пама хатĕр тăни çинчен каласа пĕлтерет.

Çак хăрушă сехетре хамăрăн халăхăн мухтавлă иртнĕ вăхăтсенчи страницисене, тăван çĕршывшăн Наполеона хирĕç пынă вăрçăна, интервентсене хирĕç кĕрешнĕ чухнехи асран кайми çулсене эпир татах тепĕр хут аса илетпĕр. Хальхи вăхăтра пирĕн халăх нихăçанхинчен те вăйлă, тачă пĕтĕçнĕ, пĕрлĕхлĕ. Вăл никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çара, хăватлă флота, сталинла авиацине туптаса çирĕплетнипе кăна мар вăйлă, вăл тата çакăнпа вăйлă: вăл хӳтлесе кĕрешекен ĕç—тĕрĕс ĕç. Фашизма хирĕç пыракан вăрçă вăл—вăтам ĕмĕрсенчи тискерлĕхе, вандализма хирĕç пыракан вăрçă.

Паян совет ученăйĕсем нихăçанхинчен те ытларах пĕтĕм совет халăхĕпе, паттăр красноармеецсемпе тата краснофлотецсемпе алла-алăн тытăнса пыраççĕ.

Малта пыракан прогрессивлă этемлĕхшĕн, Тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, Сталиншăн—кĕрешĕве!

Социализмлă Ĕç Геройĕ
Академик **С. А. Чаплыгин,**
Академик **В. И. Вернадский,**
Академик **В. Г. Хлопин,**
Академик **А. Я. Манандян,**
Академик **В. Н. Образцов.**
Академик **П. П. Маслов,**
Академик **Ф. А. Ротштейн,**
СССР Наукăсен Академийĕн член-корреспонденчĕ **Х. С. Коштоянц.**

Гитлера—вилĕм!

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 23-мĕш. **(Телефонпа хамăр корр.).** Молотов юлташ Германи фашизмĕн провокациллĕ тапăнăвĕ çинчен радио тăрăх пĕлтернине илтсен районра хăватлă митингсен хумĕ сарăлса карĕ. Предприятисенче, учрежденисенче тата колхозсенче юнлă фашизма хирĕçле митингсем пулса иртрĕç. Кашни ĕççынни фашистла Германин правителĕсем тунă вăрă-хурахла ĕçсене вĕçĕмсĕр пысăк тарăхупа сивлет. Паян древкомбинатра пĕрремĕш смена пуçланас умĕн рабочисемпе служащисен тата инженерсемпе техниксен митингĕ пулчĕ. 4-мĕш номерлĕ цехри паллă стахановец значкист Свиягин юлташ митингра çапла каларĕ:

— Ĕнер эпир радио тăрăх пирĕн телейлĕ тăван çĕршыв çине Германи фашизмĕ тапăнни çинчен пĕлтĕмĕр. Ку хыпар пĕтĕм совет халăхне ура çине тăратрĕ. Анчах фашистла бандитсен ĕмĕчĕ нихăçан та пурнăçа кĕрес çук! Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, пĕтĕм совет халăхĕ пулăшнипе, тăшмана тĕппипех çапса аркатма хатĕр. Эпир партипе правительство пĕрре чĕнсенех Хĕрлĕ Çар ретне тăрса Гитлерăн йыткĕтĕвне çĕмĕрсе тăкма хатĕр тăратпăр. Паян эпĕ хамăн ирĕкпе Хĕрлĕ Çар ретне каятăп. Сире, рабочисене, производствăра пысăк хастарлăхпа ĕçлеме чĕнетĕп.

Свиягин юлташ хыççăн 1-мĕш номерлĕ цехри старший пилостав Бирюков юлташ сăмах илет.

— Пирĕн задача,—тет вăл,—производствăра нихăçанхинчен те пысăкрах хастарлăхпа ĕçлесе, çĕршыв валли ытларах та ытларах продукци туса кăларасси пулать. Пысăк тухăçлăхпа ĕçлесе, эпир хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пулăшăпăр.

Сывă пултăр социализмлă тăван çĕршыв!

Юнлă фашизма—вилĕм!

Древкомбинатри митинг, пурте пĕр саслă пулса, çакăн пек резолюци йышăнчĕ:

— Эпир, Çĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, пирĕн совет çĕршывĕ çине фашистла бандитсем вăрă-хурахла тапăнни çинчен пĕлнĕ хыççăн, юншăн çунакан Германи фашизмне вĕçĕмсĕр ылханатпăр. Пирĕн тăван çĕршыв умне хăрушлăх килсе тухнă самантра эпир пурте Ленин—Сталин партийĕ тавра, Совет правительстви тата хамăрăн юратнă çулпуç Сталин юлташ тавра нихăçанхинчен те таччăнрах пĕтĕçетпĕр. Пурсăмăр та хамăрăн ĕç вырăнĕсенче татах та хастарлăрах ĕçлесе, мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшма пулатпăр. Кирлĕ пулсан, пурте пĕр çын пек пулса, хамăр ĕç вырăнĕсене хĕçпăшалсемпе улăштарса, социализмлă тăван çĕршыва сыхлама тухатпăр. Питех те тĕрĕс каларĕ Молотов юлташ:—Çĕнтерӳ пирĕнте пулать!

Пĕттĕр фашизм!

Сывă пултăр никам çĕнтерейми паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ тата унăн çулпуçĕ Сталин юлташ!

Районри ытти предприятисенче те хăватлă митингсем пулса иртеççĕ.

Правительство заданине пурнăçлама яланах хатĕр

ИШЛЕЙ, июнĕн 23-мĕш. **(Телефонпа).** Паян ирхине 10 сехетре район центрĕнчи рабочисен, служащисен тата колхозниксен митингĕ пулса иртрĕ. Унта 400 çын пулчĕ. Митингра ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Сидоров, белофиннсене хирĕç пулнă çапăçу участникĕ, «За отвагу» медальпе наградăланă Александров, Евдокимов, Винокуров юлташсем сăмах тухса каларĕç. Вĕсем тăван çĕршывшăн çапăçăва тухма хатĕр тăни çинчен пĕлтерчĕç.

Митинг участникĕсем кашни харпăрхăй ĕçне пысăк ăнланулăхпа туса пыма, ĕç дисциплинине нихăçанхинчен ытларах çирĕплетме тата Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса пыма пулса резолюци йышăнчĕç.

Çавăн пекех, паян районри колхозсенче пуринче те митингсем пулса иртеççĕ.

Р. МАЛЮТИН.

Хăвăртрах фронта яма ыйтаççĕ

Красноармейски районри çар комиссариатне хăйсене фронта яма ыйтса заявлени паракансем нумай. Районри çĕрĕç отделĕнче ĕçлекен агроном Филиппов, райпотребсоюзра ĕçлекен Павлов, МТС работникĕ Белов, районри хаçат редакцин секретарĕ Майоров тата ытти юлташсем хăйсене хăвăртрах Германи фашисчĕсене хирĕç пыракан вăрçă фронтне яма ыйтаççĕ.

Вĕсем хăйсен заявленийĕсенче тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннă фашистсене пĕтерсе хурассишĕн паттăрла çапăçма пулса сăмах параççĕ.

Черчилль радио тăрăх тухса каланă сăмах

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян Англи премьерĕ Черчилль Англи валли тата ютçĕршывсем валли радио тăрăх сăмах тухса каланă. Черчилль çапла каланă: эпĕ паян каçхине сирĕн умра сăмах тухса калама май пулнипе усă курас терĕм, мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра эпир вăрçăн çаврăнуллă пункчĕсенчен пĕрне çитрĕмĕр. Паян ирхине 4 сехетре Гитлер Россия çине тапăнса кĕнĕ. Германипе ССР Союзĕ хушшинче пĕр-пĕрин çине тапăнас марри çинчен тунă договора пурнăçа кĕртсе пыман пирки Германия хăй кӳренни çинчен пĕрре те пĕлтермен. Договорпа витĕнсе, Германия Шурă тинĕс патĕнчен Хура тинĕс патне çити тăсăлса выртакан лини çине питех те пысăк çарсем пухса тăратнă. Германин сывлăш-çар вăйĕсем, бронетанковăй дивизийĕсем майĕпен тата тăтăшах хăйсен позицийĕсене йышăнса пынă. Нимĕн кĕтмен çĕртен, вăрçă пуçласси çинчен пĕлтермесĕр, ултиматум та памасăрах вырăссен хулисем çине Германия бомбăсем пăрахма пуçланă. Çапла ĕнтĕ алă пусса çирĕплетнĕ договора тата тĕнчери çĕршывсем хушшинчи тӳрĕлĕхе татах тепĕр хут, татах та пысăкраххăн пăснă. Çапла тунине эпир Норвегире, Данире, Голландире, Бельгире куртăмăр, çав тӳрĕлĕхе шакал Муссолинипе пĕрле Гитлер Греци тĕлĕшпе те пăсрĕ.

Вырăс халăхĕ хăйĕн тăван çĕрне хӳтлет, унăн çулпуçĕсем ăна хăйĕн противникне вĕçне çитиех кĕрешме чĕнчĕç. Гитлер вăл—юн тăкса тата вăрă-хурахла ĕçсем туса тăранма пĕлмен тискеркайăк. Пĕтĕм Европа хăйĕн ури айĕнче выртнипе е ăна тĕрлĕ майпа хăратса пăхăнтарнипе тăранмасăр, халĕ вăл хăйĕн юнлă та аркатуллă ĕçне Российăпа Ази анлă территорийĕсем çинче тума пуçларĕ. ССР Союзĕ çине тапăнни вăл—Гитлер Китайра пурăнакан 400 е 500 миллион çынна, Индире пурăнакан 350 миллион çынна этем деградацийĕн—свастикăн шуйттанла эмблемине йăтса тăракан деградацин тĕпсĕр шăтăкне персе чикме хăтланса тăвакан хатĕрленӳ кăна.

Черчилль Англи правительствин декларацине вуласа панă, çав декларацире Англи правительстви Гитлера тата национал-социалистла режима пĕтерсе тăкма вĕçне çитиех хатĕр тăни çинчен каланă. Эпир, тенĕ Черчилль, Гитлерпа нихăçан та калаçусем ирттерес çук. Ăна эпир çĕр çинче те, тинĕс çинче те, сывлăшра та çĕмĕрĕпĕр. Эпир Российăна тата вырăс халăхне мĕнле пулăшу пама вăй çитерĕпĕр, çавна йăлтах парăпăр. Эпир хамăрăн çĕр чăмăрĕн мĕнпур пайĕсем çинчи пĕтĕм туссемпе союзниксене çакăн пек çулпах пыма, ăна, пирĕн пекех, пĕтĕм чĕререн тата вĕçне çитиех çирĕппĕн пулăшма чĕнетпĕр. Эпир Советлă Российăн правительствине хамăр пама пултаракан тата уншăн усăллă пулма пултаракан мĕнпур техникăллă е экономикăллă пулăшăва пама сĕнтĕмĕр. Эпир Германи çине кăнтăрла, çавăн пекех çĕрле те бомбăсем пыра-пыра пăрахăпăр, ун çине нумайрах та нумайрах бомбăсем пăрахăпăр, Германия этемлĕхе персе чикнĕ хĕн-хурсене ăна кашни уйăхрах вăйлăрах та вăйлăрах туйтарăпăр.

Ĕнер кăна Англи авиацийĕ Франци территорийĕ тĕлĕнче çапăçса, çапăçура пысăк мар çухатусем туса, Франци çĕрĕ тĕлĕнче Германин 28 самолетне—çар самолечĕсене персе антарчĕ. Анчах та çакă вăл пуçламĕшĕ кăна-ха: малашне пирĕн сывлăш-çар вăйĕсен операцийĕсем татах та анлăрах пулса пырĕç. Эпир Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен тĕрлĕ йышши çар материалĕсемпе тата йывăр бомбардировщиксемпе илекен пулăшу çывăхри ултă уйăхра сисĕнме пуçлĕ.

Пĕрлешӳллĕ Штатсен ĕçĕсем çинчен манăн мар ĕнтĕ каламалла. Анчах эпĕ çакăн çинчен калама пултаратăп: Гитлер хăй Советлă Россия çине тапăнни хăйне пĕтерме шут тытнă демократиллĕ çĕршывсен тĕллевĕсем тĕлĕшпе кăштах та пулин разногласисем патне илсе пырĕ е вĕсен кĕрешес хастарлăхне вăйсăрлатĕ тесе шутлать пулсан, вăл питех те хытă йăнăшать. Йăлтах урăхла, пирĕн этемлĕхе Гитлер пусмăрĕнчен çăлса хăварас кăмăл татах та ытларах çирĕпленет, пирĕн хăюллăхпа пирĕн ресурссем чакас çук. Гитлер Россия çине тапăнса кĕни вăл—Британи утравĕсем çине тапăнса кĕме хăтланса пăхас умĕн тăвакан ĕç. Вăл, нимĕн иккĕленмелли те çук, çакна шанса тăрать: çав тапăнăва хĕл пуçланиччен пурнăçа кĕртме пулать, Пĕрлешӳллĕ Штатсен флочĕпе сывлăш-çар вăйĕсем кĕрешĕве хутшăниччен малтан Великобританине çĕнтерсе илме пултаратăп, тесе шутлать. Вăл çапла шанса тăрать: хăйĕн противникĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн пĕтерсе пырас ĕçе тата тепĕр хут, анчах нумай анлăрах масштабсемпе тăватăп, тесе шутлать. Çакăн хыççăн вăл Хĕвеланăç полушарине пăхăнтарассишĕн кĕрешме пуçлĕ.

Çапла ĕнтĕ, Российăшăн тухса тăнă хăрушлăх пирĕн хăрушлăх тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хăрушлăхĕ пулса тăрать, çавăн пекех хăйĕн çĕрĕпе пӳрчĕшĕн кĕрешекен кашни вырăсăн ĕçĕ çĕр чăмăрĕн кирек хăш пайĕнче пурăнакан ирĕклĕ çынсен тата ирĕклĕ халăхсен ĕçĕ пулса тăрать.

(ТАСС).

◆

Кипр утравĕ çинче вăрçа хатĕрленни

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 22-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Австралин моторизованнăй чаçĕсем Кипр çинче, утрав çине тапăнса кĕрессинчен сыхланса, оборонăллă вăйлă позицисем туса хунă. Утрав оборонин планне туса хатĕрленĕ чухне англичансем Критри кĕрешӳн урокĕсене шута илнĕ. Утрав çинче кашни кун тенĕ пекех сывлăшран тапăнни çинчен тревогăсем туса ирттереççĕ, анчах та бомбăсем пăрахасси сайра-хутра кăна пулать.

КĔСКЕН

▲ Зеленый Мыс утравĕсем çине кайма Португали транспорчĕ тухнă. Транспорт çинче 1.000 салтак ларса пырать.

▲ Суту-илӳ министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрель уйăхĕнче США ютçĕршывсене 591 самолет, е март уйăхĕнче сутнинчен 110 самолет нумайрах сутнă.

▲ Июнĕн 16-мĕшĕнче Муглере (Турция) татах тепĕр хут çĕр чĕтреннĕ. Çĕр чĕтреннипе нумай çуртсем çĕмĕрлнĕ. Халăх хăйĕн килĕсенчен тухса кайнă.

▲ Хуннеберг районĕнче (Хĕвеланăç Швецире, Трольхетан хули çывăхĕнче) государство торф кăларттарнă çĕрте ĕçлекен 200 рабочи забастовка пуçласа, июнĕн 16-мĕшĕнче ĕçлеме чарăннă. Рабочисем ĕç укçине хăпартма ыйтаççĕ.

Тимур гробници

САМАРКАНД, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС-ăн ятарласа кайнă корреспонденчĕ). Тимур ывăлĕсен—Миран-Шахпа Шахрухăн, паллă завоеватель внукĕн — Улуг-бекăн тупăкĕсене уçнă та ĕнтĕ. Археологсем, историксем, антропологсем мрамортан тунă саркофагран Улуг-бекăн шăммисене калама çук асăрханса, тирпейлĕн тыткаласа кăларнă.

Улуг-бек тупăкĕ çинчи чул çине çырса хунă сăмахсене историксем тĕплĕн вулаççĕ.

Паян Гур-Эмир склепĕн центральнăй гробницине уçас тĕлĕшпе ĕçлеме пуçлаççĕ. Унта Тимура пытарнă.

Тимур гробници çийĕнчи хулăм чул-плитана асăрханса йăтаççĕ, айккинелле сирсе пăрахаççĕ.

Çав чул-плита айĕнче ученăйсем алебастр йышши ганчан хулăм сийне кураççĕ. Ăна асăрханулăн сирсе пăрахса, археологсем татах 5 плита тупаççĕ. Плитасем юнашар выртаççĕ. Юлашкинчен, плитасене те илсе пăрахнă. Мрамортан тунă саркофагра йывăç тупăк выртать, ăна хулăм пусма юлашкисем витсе тăраççĕ. Пусмана ылттăн тата кĕмĕл çипсемпе тĕрленĕ. Хăшпĕр татăксем çинче тĕрлесе çырнă сăмахсем уççăнах курăнаççĕ. Тупăка питĕ çирĕп йывăçран тунă, вăл лайăх сыхланса выртнă. Тупăка çирĕплетсе тăракан хăмасемпе чикмексем те çĕрсех пĕтмен.

Тупăк хуппине уçнă хыççăн, çын шăммисен кĕлеткине тупнă, унăн пĕр ури кĕскерех пулнине палăртнă.

Тимурăн пуç шăмми начар сыхланса выртнă. Çакă вăл саркофагра шыв пулнинчен килнĕ.

Витринăсем пирки

Атăл хĕрринче кашни кунах темĕн чухлĕ çын çӳрет. Кăнтăрла килхуçи арăмĕсем хăйсен ачисемпе Атăл хĕрне уçăлма тухаççĕ. Ĕç хыççăн вара унта уяври пекех халăх нумай.

Атăл хĕрринче витринăсем пилĕк вырăнта. Иртнĕ çулсенче кунта кашни витрина çинчех хаçатсем пулнăччĕ. Атăл хĕррине тухнă çынсем çĕнĕ хаçатсем вулама пултаратчĕç.

Анчах, халь витринăсем çинче çĕнĕ хаçатсем сахал пулаççĕ, вĕсем вырăнне çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ кантăксем ăшĕнчи хăма çеç. Кун пирки хаçатсем çине пĕр хут çеç çырман ĕнтĕ. Çапах та, вăл витринăсене никам та йĕркелеме шухăшламасть.

Мĕншĕн йĕркелемелле мар-ши витринăсене?

И. Г-з

Пирвайхи комбайнерсем

Иртнĕ çулта Тарнополь облаçĕнче тырпул пухас ĕçре 2 комбайн ĕçленĕ пулсан, кăçалхи çул 46 комбайн ĕçлемелле пулать. Çамрăк комбайнерсем хăйсемшĕн çĕнĕ ĕçе çавтери кĕтеççĕ. Збаражски районри сентябрĕн 17-мĕш ячĕпе тăракан колхозри колхозница Екатерина Шуст иртнĕ çул пирвайхи хут трактор курнă. Нумаях пулмасть Екатерина Шуст Кременцра комбайнерсен 6 уйăхлăх курсĕнчен ăнăçлăн вĕренсе тухнă.

Комбайнерсен пирвайхи группине вĕрентсе кăларнă. Вĕсем пурте çĕнĕ ĕçпе калама çук хытă интересленеççĕ. Часах пысăк тухăçлă тырпула выçса пухма пуçлаççĕ.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин «Зерно» павилонĕнче Станислав тата Дрогобыч облаçĕсенчи (УССР) колхозниксем Курск облаçĕнчи Беловски районри «Рум» колхозăн паллă бригадирĕпе Ф. П. Титовпа тĕл пулнă, Титов юлташ вĕсене хăй 1940 çулта 18 гектар çĕр лаптăкĕ çинче гектар пуçне мĕнле майпа 30,1 центнер хуратул туса илни çинчен каласа панă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): В. И. Григорьев—Щорс ячĕпе тăракан колхоз председателĕ (Станислав облаçĕ), Н. С. Гольдивская—Сталин ячĕпе тăракан колхоз звеньевойĕ (Дрогобыч облаçĕ), Е. Г. Дзигин—Хрущев ячĕпе тăракан колхоз звеньевойĕ (Станислав облаçĕ), С. И. Мозиль—Сталин ячĕпе тăракан колхоз звеньевойĕ (Дрогобыч облаçĕ), Е. П. Титов, М. К. Штефурек—«Червоный прикардон» колхоз колхозници (Станислав облаçĕ) тата М. И. Залесская—«Правда» колхоз телятници (Станислав облаçĕ). Н. Алексеев фото-ӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

Кĕсресене чуптармалли плана вăхăтра тултармалла

Июнĕн 1-мĕш тĕлне пирĕн республикăра кĕсресене чуптармалли плана 73,6 процент, вăл шутран искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли плана 64,6 процент тултарнă.

Хăшпĕр районсенче кĕсресене чуптарас ĕç юлса пынине çур кая юлса килни çине тата кĕсресем начарри çине яма пăхаççĕ. Анчах, кĕсресене чуптармалли плана районсем тăрăх мĕнле тултарса пынине пăхса тухнă хыççăн пачах урăхла курăнать. Чылай районсем кĕсресене вăхăтра чуптарса хăварассишĕн кĕрешмеççĕ. Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай районĕсен условийĕсем иккĕшĕн те пĕрех. Апла пулин те, кĕсресене чуптарас тĕлĕшпе Çĕмĕрле районĕ маларах пырать. Çавăн пекех, Куславкка районĕ те вăрмарсенчен 16 процент маларах пырать.

Чылай районсенче кĕсресене чуптарас ĕçе лайăх организациленĕ, çав вăхăтрах кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес тĕлĕшпе ĕçлекен пунктсенче ĕçсем пачах çителĕксĕр пыраççĕ. Сăмахран, Çĕмĕрле районĕ кĕсресене айăрсемпе чуптармалли плана 84 процент тултарнă пулсан, искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли плана пĕтĕмпе те 18 процент кăна тултарнă. Советски, Кувакино районĕсенче те кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентерсе хăвармалли плана тултарса пымаççĕ. Улатăрпа Шупашкар тата Первомайски районсенче кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктсем халĕ те ĕçлеме тытăнман.

Кĕсресене чуптарса хăварасси кая юлса пыни вăл пĕтĕмпех кĕсресене чуптарса хăварма çителĕксĕр хатĕрленнинчен тата çак ĕçре çирĕп контроль пулманнинчен килнĕ. Çакна чылай фактсемпе çирĕплетсе пама пулать. Кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктсен зонине кĕрекен «Красный Четай», «Красная звезда», «Пятилетка», «Новый путь», «Марксист» тата ытти колхозсенче кĕсресене ăратлă мар айăрсемпе чуптараççĕ. Çавăн пекех, «Прогресс» колхоз çумĕнчи (Советски р.) кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктра госплемконюшнăн таса ăратлă айăрĕ пур çĕртенех кĕсресене ăратлă мар айăрсемпе чуптараççĕ. Çак пунктра чуптарма çирĕплетнĕ кĕсресен спискне те туман, колхозсенчен кĕсресене чуптарма йĕркеллĕ илсе пымаççĕ. Районри ветеринарипе зоотехника работникĕсем кĕсресене чуптармалли пунктсенче сайра-хутра çеç пулаççĕ. Государство планĕ тăрăх, кĕсресене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктсенче 150 кĕсререн кая мар пĕтĕлентерме пăхнă. Анчах райçĕрĕç пайĕ хăйĕн ирĕкĕпе çав пунктсем çумне 108 кĕсре çеç çирĕплетсе панă. Çакăн пек тĕслĕхсем Тăвайпа Кувакино районĕсенче те пур.

Кĕсресене чуптарас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шансаларнине халех пĕтерес пулать, ку ĕçе куллен ертсе пыни кирлĕ. Кĕсресене айăрсемпе тата искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктсенче ĕçе контроллесе тăрас çĕре районсенчи ветеринарипе зоотехника работникĕсене явăçтарас пулать.

Пирĕн халĕ лашасен йышне малалла хăвăрт ӳстерсе пыма хавхалантаракан закон пур. Çав хавхалану ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес ĕçре лайăх ĕçлекен колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленинчен тухса тăрать. Çак постановлени çинчен выльăх-чĕрлĕх пăхакан колхозниксемпе колхозницăсем лайăх пĕлеççĕ, ăна кулленхи ĕçре пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышне пур енчен те ӳстерсе пырас пирки хавхаланса ĕçлеççĕ. Ку ĕçре районсенчи çĕрĕç пайĕсемпе колхоз председателĕсен куллен пулăшни кирлĕ. Кашни колхозăн кĕсресене чуптармалли плана тултарассишĕн кĕрешмелле.

Г. ИЛИВАНОВ.

Чăваш АССР Наркомземĕн коневодство управленийĕн начальникĕ.

ССР Союзĕнчи халăхсен çырулăхĕн историйĕ

СССР Наукăсен Академийĕн чĕлхепе çырулăх институчĕ пирĕн çĕршыври халăхсен çырулăхĕн историне кăтартса паракан выставка уçма хатĕрленет. Выставкăра 200 ытла алфавит курма пулать. Вăл шутра халăхсен культурăллă аталанăвĕн тĕрлĕ тапхăрĕсенче пулнă чи авалхи алфавитсенчен пуçласа хальхи вăхăтри, вырăс графикин никĕсĕ çинче тунă алфавитсем таранах пулаççĕ.

Выставка юлашки 3.600—3.700 çул хушшинче çырулăх мĕнле аталанса пынине тата ăна Октябрьти социализмлă аслă революци хыççăн илнĕ халăхсен çырулăхĕ мĕнле аталанса пынине кăтартса парать. Çак разделра адыгеецсен, кабардинецсен, ингушсен, чеченецсен, даргинецсен, кумыксен, башкирсен, киргизсен, якутсен, алеутсен, чукчасен, эвенксен тата ытти пĕчĕк халăхсен культурипе паллашма пулать.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Б. Ц. УРЛАНИС «Рост населения в Европе». Госполитиздат. Москва. 1941. 436 стр. 8 р. 75 к. с переплетом.

Вăтам ĕмĕрти демографи даннăйĕсене тĕплĕн анализ тунă никĕс çинче автор научнăй перепиçсем пуçланичченхи вăхăтранах Европăра пурăнакан халăхсен хисепĕн динамикине тума тăрăшать. Империализмлă иккĕмĕш вăрçă пуçламĕшĕнче Хĕвеланăç Европăри халăхсен динамикине характеристика парса, автор çакна кăтартса парать: çынсем çурални, вилни тата естественнăй хутшăнса пыни çинчен калакан анлăн сарăлнă коэфициентсем тĕрĕс мар тата вĕсем Хĕвеланăç Европа çĕршывĕсем тĕлĕшпе те тĕрĕс мар картина параççĕ. Автор тĕпчесе пĕлнисем Хĕвеланăç Европăра (Балканри çĕршывсемсĕр пуçне) мирлĕ вăхăтра та вилекенсен коэфициенчĕ çуралакансенчен ытларах пулса тăрать.

О. БЛЭКВУД, Э. ХЭТЧИНСОН, Т. ОСГУД, А. РЮЭРК, В. СЕНТ-ПЕТЕР, Д. СКОТТ, А. УОРСИНГ. «Очерки по физике атомов». Перевод с английского. Издание второе. Гостехиздат. Москава — Ленинград. 1941. 352 стр. 13 р. 50 к.

Ку кĕнеке вещество строенийĕ çинчен кучухнехи наука вĕрентнине пĕр çĕре пĕтĕçтерсе кăтартать. Авторсем кучухнехи физикăн питех те кирлĕ ыйтăвĕсене (молекулсемпе атомсем çинчен вĕрентекен теори аталанса пыни, атом строенинче электрон мĕнле вырăн йышăнса тăни, световăй квантсен теорийĕ, относительность теорийĕн никĕсĕсем, кучухнехи астрофизика обзорĕ) питех те уççăн çутатса параççĕ. Атом ядри тата элементарлă частицăсем çинчен калакан сыпăка, вырăс изданийĕ çумне хушса, совет физикĕ профессор Э. В. Шпольский çырнă.

Р. В. КУНИЦКИЙ «Развити взглядов на строение солнечной системы». Второе издание. Гостехиздат. Москва — Ленинград. 1941. 69 стр. 1 р. 25 к.

Хĕвел системин строенийĕ çине пăхасси мĕнле аталанса пынин историйĕ материализмлă мировоззренишĕн кĕрешнин историйĕнчи чи паллă страницăсенчен пĕри пулса тăрать. Автор тахçан ĕлĕк авалах çĕрĕçĕн, тинĕс çинче ишсе çӳренин тата ыт. ĕçсен практикăллă нушисенчен пĕлĕт çинчи япаласене сăнаса пĕлес шухăш пуçланса кайни çинчен, хĕвел системин ытти планетисемпе вĕсен спутникĕсем хушшинче Çĕр çине çынсем пăхасси мĕнле улшăнса пыни çинчен каласа парать. Кĕнекен чылай пысăк пайĕнче кучухнехи астрономи çинчен калакан наукăна тăвакан тата тĕнче çине наука вĕрентнĕ пек пăхассишĕн тăракан çынсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырнă, ун пек çынсен шутне çаксем кĕреççĕ: Коперник, Джордано Бруно, Галилей, Кеплер, Ньютон.

Кĕнекене рабочи, колхозник, шкулачи вуласа ăнланмалла чĕлхепе çырнă.

В. Р. ВИЛЬЯМС «Луговодство и луговая площадь». Под общей редакцией проф. В. П. Бушинского. Сельхозгиз. Москва. 1941. 19 стр. 3 руб. с переплетом.

Кĕнекере çарансем тăвас тата уй хирте выльăх апачлĕх акмалли курăксен лаптăкне организацилес ĕç никĕсĕсене научнăй майпа кăтартса панă. Автор курăксем акнипе çĕрĕн çиелти сийĕн физически тата химически свойствисенче пулса иртекен улшăнусем çинчен каласа парать тата курăксенчен пысăк тухăçлăх илме, çĕре çимĕç ытларах памалла тума, çавна май курăксем хыççăн акакан культурăсен тухăçлăхне ӳстермелли агротехникăллă майсем çинчен тĕплĕн çутатса парать.

Вырăс халăх юррисен хорĕсем валли чи лайăх произведени çырас тĕлĕшпе пулса иртнĕ конкурс

Вырăс халăх юррин хорĕсем валли чи лайăх произведени çырас тĕлĕшпе пуçланнă конкурс вĕçленнĕ. Çак конкурса искусство ĕçĕсен ССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ организациленĕ. Конкурса 13 композитор хутшăннă, вĕсем 30 юрă тăратнă. Вăл шутран 14 юрăна Мускаври самодеятельнăй хорсем вĕреннĕ, конкурсăн иккĕмĕш турĕнче юрласа панă. Конкурс жюрийĕ (председателĕ Сталинла премин лауреачĕ композитор Ю. А. Шапорин) пĕрремĕш премине никама пама та май çук тесе йышăннă. Иккĕмĕш премине — 3.000 тенкĕ — композитор В. Алексеева «Поиному светит солнце» тата «На базаре в Балте нашей» ятлă юрăсемшĕн панă. Композитор Д. Васильев-Буглай сказительница-орденоносец Марфа Крюковăн тексчĕ тăрăх çырнă «Ленин» ятлă юрăн виççĕмĕш премипе паллă тунă — 2.00 тенкĕ панă.

Композиторсене — В. Захарова «О урожае» юрăшăн (текстĕ А. Твардовскин), Н. Чаплыгина «От села до села» юрăшăн тата С. Аксюка «Проводы» юрăшăн хавхалантармалли премисе памалла тунă. Конкурса композиторсем — Э. Мурацели, Н. Чаплыгин, Г. Лобачев, А. Новиков, М. Черемухин тăратнă темиçе произведенине пичетлесе кăларсан лайăх пулать тесе йышăннă. Июнĕн 19-мĕш. (ТАСС).

Пĕтĕм Союзри 1941 çулти ялхуçалăх выставки

Карело-Финн ССР павильонĕнче

Карело-Финн республики — вăрмансемпе кӳлĕсен çĕршывĕ—Октябрьти Аслă революциччен Российăри чи чухăн та кĕлмĕçлĕ вырăнсенчен пĕри пулнă. Çĕр тăрантарма пултарайман. Пĕтĕм акмалли çĕртен 67 процент казна тата монастырьсемпе помещиксен аллинче пулнă. Хресченсем, лайăх пурнăç шыраса, килĕсене пăрахсах вăрман ĕçне тата пулă тытас ĕçе кайнă. Анчах унта та пурнăç çав-çавах начар пулнă. Акă мĕн çырать Пудожск уезчĕн врачĕ земски собранине тăратнă хăйĕн докладĕнче:

«Условия, при которых им приходится работать, таковы, что они постоянно являются источником всяких заболеваний—тифа, бронхитов, плевритов, ревматизмов. Медицинской помощи ни во время сплава нет никакой. Нет ничего удивительного, что доходя кое-как до города, бурлаки переполняют больницы».

Урăхла пулма та пултарайман, мĕншĕн тесен пĕтĕм Олонецк губернийĕпе те 400 пин çын валли 20 больница, фельдшерсемпе акушеркăсем 5 çын çеç пулнă. Ялсенчи 1—2 çулти ачасем çуллен 40 процент вилсе пынă.

Халăха вĕрентес ĕç те çак виçерен иртмен. Карел хĕрарăмĕсенчен кашни 100 çын пуçне çырăва пĕлекенсем 6 çын çеç пулнă.

Совет влаçĕ пулнăранпа çак çĕршыв мĕнле улшăнса çĕнелнине, ĕлĕкхи тĕттĕм те чухăн окраина халĕ шултра промышленноçлă, механизациленĕ ялхуçалăхлĕ, чечекленсе ӳсекен республика пулса тăнине павильонри йышлă экспонатсем, макетсем, документсем питех те уççăн кăтартса параççĕ.

Карело-Финн республикин территорийĕн 5 пайĕнчен виçĕ пайне хаклă вăрмансем йышăнса тăраççĕ. Йывăç запасĕ пĕр миллиард кубометр ытла шутланать. Вăрман пуянлăхĕ калама çук пысăк. Республика вăрманĕсенче йывăç çуллен 15 миллион кубометр яхăн çĕнĕрен ӳссе тăрать.

Пысăк диорамăсем сăрт-тусенчен шывсем сиксе, шарласа, хăвăрт юхса выртнине кăтартса параççĕ. Вăл шывсем тăрăх пароходсем çӳреме пултараймаççĕ, анчах та вĕсенче çавтери пысăк хăватлă энерги пурри курăнать. Вăл шывсемпе усă курсан, çĕршыва çуллен 10 миллиард киловатт-сехет электроэнерги пама пулать.

Çав юханшывсен вăйĕсемпе усă курас ĕç пуçланнă та ĕнтĕ. Карело-Финн ССР территорийĕнче сталинла эпохăри пысăкран та пысăк сооруженисенчен пĕрине — Беломорско-Балтийский канала туса çитерес ĕçе яни темиçе çул та иртрĕ. Çав каналăн макетне сарлака та пысăк диорама çинче кăтартса панă. Посетительсем, экскурсантсем унăн умĕнче яланах нумайăн тăраççĕ, ытараймасăр икшер, виçшер хут пырса пăхаççĕ. Канал тăрăшĕнчи районсен сăн-сăпачĕсем пĕтĕмпех улшăннă. Кунта индустриллĕ пысăк центрсем—Медвежегорск, Беломорск, çавăн пекех тата сĕт-çу, пахча-çимĕç совхозĕсем çитĕнсе ларнă.

Промышленноçăн çĕнĕ отраçлисем ăнăçлăн ĕçе кĕрсе пыраççĕ. Кондопогăри тата Сегежри хут комбиначĕсем çĕршыва çуллен 25 миллион та 517 пин тенкĕлĕх продукци параççĕ. Республикăри мĕнпур промышленность продукцийĕнчен 53 процентне вăрман тата лесохимически промышленность йышăнса тăрать.

Вăрман хатĕрлес ĕçри условисемпе майсем те пĕтĕмпех çĕнелсе улшăннă. Лесорубсен ĕçне машинăсемпе çăмăллатнă. 1937 çулта вăрмансенче тракторсем, автомобильсем тата ытти машинăсем çĕршер ĕçленĕ. Сĕм вăрман хушшинче халĕ унта та, кунта та лайăх поселоксем çитĕнсе ларнине асăрхатăн, вĕсенче электричество çутти ялкăшать.

Карело-Финн республикин юханшывĕсемпе кӳллисенче тĕрлĕрен пулăсем нумай. Пулă запасĕ миллионшар центнер шутланать.

Пуринчен те ытларах ялхуçалăхĕ пысăк çитĕнӳсем тунă. 1940 çул вĕçĕ тĕлне Карело-Финн ССР-чи хресчен хуçалăхĕсене коллективизацилени 97,6 процента çитнĕ. Республика территорийĕнче халĕ 41 МТС тата 21 совхоз организациленĕ. Ялхуçалăхне хăвăрт механизацилесе пырса, социализмлă майсемпе ĕçленине пула тырпул тухăçĕ те хăвăрттăн ӳссе пырать. 1913 çулта тĕштырă культурисен тухăçлăхĕ 8 центнертан ытла пулман пулсан, 1939 çулта 11,5 центнершер пухса илнĕ. Çурхи тулăпа çĕрулми тухăçĕ икĕ хут ытла ӳснĕ.

Акă эпир малта пыракан колхозсен çитĕнĕвĕсене кăтартса паракан стэнд умĕнче. Кондопога районĕнчи «Культура» колхоз членĕсем иртнĕ çулта гектартан ыраш—18 центнер, тулă—2 центнер, сĕлĕ—24 центнер тата хăя 275 центнер пухса илнĕ. Революциччен карело-финн хресченĕсем тулă, пахча çимĕç тата тымар-çимĕç мĕн иккенне те пĕлмен. Халĕ ĕнтĕ республикăр уйхирсенче, пахчасенче тĕрлĕрен çимĕçсем, клевер тата ытти курăксем тухăçлăн ӳсеççĕ.

Выставка участникĕ «Кемский» совхоз иртнĕ çулта гектартан 17 центнер тулă, 406 центнер купăста тата 41 центнер турнепс пухса илме пултарнă.

Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ, большевиксен тăрăшнипе, кунта та, Поляр тавралăхĕ патĕнче, çĕр пысăк тухăçлă тырпул ӳстерме пултарнине аван кăтартса параççĕ.

Карело-Финн халăхĕ, аслă вырăс халăхĕпе çирĕп туслăхра тăрса, хăйĕ çĕнĕ, савăнăçлă пурнăçне чечеклентерет. Павильонра ытти нумай колхозсемпе пĕрлех Карело-Финн ССР-ĕн советлă çĕнĕ районĕсенчи çамрăк колхозсен малтанхи ĕçĕсене те кăтартнă.

Çак пуян çĕршыври халăха вĕрентес ĕçе, вĕсем хушшине культура сарас ĕçе патша правительстви юриех чăрмантарса тăнă. Карелире шкулсем уçни çинчен пĕлтернĕ рапорт çине Николай III патша: «Излишняя торопливость вовсе нежелательна», тесе резолюци хунă. Хальхи вăхăтра Карело-Финн республикинче пурăнакан халăхран 95 проценчĕ çырăва пĕлеççĕ. Çапла аталантарса пырать ирĕке тухнă карело-финн халăхĕ хăйĕн пурнăçĕпе культурине. Халăх хăйĕн телейĕ çинчен авалтанпа ĕмĕтленни пурнăçа кĕчĕ.

А. ФЕДОРОВ.

Мускав, июнĕн 18-мĕш.

Пĕчĕк заводăн пысăк ĕçĕсем

ВĂРМАР. Кĕтеснерти пахча-çимĕçсем типĕтекен завод хăйĕн производствăллă планĕсене çулран çулах ăнăçлăн, ытлашшипех тултарса пырать. Иртнĕ çулхи плана вăл 127 процент тултарнă. Кăçалхи пĕрремĕш çурçул планне завод 133 процент тултарчĕ.

Рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн хастарлăн кĕрешеççĕ. Çавăнпа та кунта 1941 çулта ĕç тухăçлăхĕ 18 процент ӳснĕ, продукцин хăйне ларакан хакĕ планпа пăхнинчен 7 процент ытларах чакнă.

Рабочисем, стахановла ĕçлесе, хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Уйрăмăнах ĕçре каскалакан цехри Анна Никифорова бригади малта пырать. Унăн сменинчи рабочисем кулленхи нормăна 120—150 процент тултарса пыраççĕ. Кунта чи пултаруллă стахановкăсем — Анна Матвеева, Мария Игнатьева, Иустина Давыдова юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем нормăна кулленех 130—150 процентран кая тултарса курман. Çавăн пекех сортлакансем — Раиса Петрова, Агрипина Макарова, сушильщик Николай Алексеев юлташсем те хăйсен нормисене 130-шар процент тултараççĕ.

Завод ӳссех пырать. Кăçал производствăна механизацилес ĕç пуçланать. Ун валли халь двигатель илсе килнĕ. Условисем лайăхлансах пыраççĕ. Рабочисем илекен ĕçукçи ӳссех пырать.

Завод директорĕ П. С. Таратин юлташ завода малти рете кăларассишĕн ырми-канми ĕçлет. «Хăш чух çывăрмасăр та, канмасăр та ĕçлетĕн. Вăя хуратăн, тăрăшатăн. Ĕçлени сая каймасть. Завод плана ытлашшипех тултарса пырать. Ăна кура—хисеп. Ĕçе хаклаççĕ. Çавăнпа татах та тăрăшса ĕçлес килет», тет Таратин юлташ.

Ун аллинче — Мускавран илнĕ хаклă хут. Кĕтеснер заводĕнчи рабочисене тата директора премилесси çинчен çырнă приказ. Директора 500 тенкĕ, рабочи-стахановецсене 1500 тенкĕ укçа парса премилесси çинчен каланă унта.

— Ку укçана, премине чи лайăх стахановецсене паратпăр ĕнтĕ. Кунсăр пуçне Чăвашторгплодоовощ тресчĕ те рабочисене преми шучĕпе канмалли суртсене каймашкăн 15 путевка пачĕ,— тет Таратин юлташ.

В. ТУРТУШ.

КĔСКЕН

☆ Джалал-Абад облаçĕнчи (Кирги-ия) колхозниксем кăçалхи çул арбузпа дыня тухăçлăхĕ питех те пысăк пуласса кĕтеççĕ. Базарсенче ир çитĕнекен дынясене сутма пуçланă.

☆ Серпуховри инкубатор станцийĕ 43.000 чĕп кăларнă. Сезон пĕтиччен вăл Мускав облаçĕнчи колхозсене татăх тепĕр 200.000 чĕпрен кая мар парать.

☆ Узбекистанри юханшывсемпе каналсем çинче кăçалхи çул колхозсем 6 гидроэлектростанци тăваççĕ. Вĕсем 75 колхоза электроэнерги параççĕ.

☆ Карачайри колхозник-туристсем усем урлă 150 километрлă поход тунă. Походра пулнă 55 çын пурте «Турист СССР» значокĕн нормисене панă.

☆ Минскра Белоруссири музыкальнăй шкулсенче отлично вĕренекенсен фестивалĕ пуçланнă. Фестивале 160 ямрăк исполнитель — республикăри музыкальнăй 19 шкулта вĕренекенсем хутшăнаççĕ.

☆ Ригăри оперăпа балет театрĕ . Калнынь композиторăн «Банюта» оперине хатĕрленĕ. Латышсен çак оперине Латви искусствин Мускавра пулмалли декадин репертуарне кĕртнĕ.

☆ Финский заливра, Сестрорецк çывăхĕнче, пулăçсем 2 метр тăршшĕ тата 10 килограмм таякан севрюга тытнă. ТАСС).

Пирĕн уйхирсенче çумкурăксем пулмалла мар

Вăйлă тырпул туса илес çĕрте çумкурăксемпе кĕрешесси пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăрать. Çумкурăксемпе кĕрешес ĕçе йĕркеллĕ туса пырас тесен пирĕн уйхирсенче мĕнле çумкурăксем ӳссе çитĕннине тата вĕсен пурнăçне пĕлни кирлĕ.

Пуриншĕн те паллă, уйхирсенчи çумкурăксем тухăçлă тырпул туса илме чăрмантараççĕ. Вĕсем тăпрари нӳрлĕхе тата минераллă япаласене хăйсем çумне туртса илеççĕ, çумкурăксем хуплаca лартнипе калчасене хĕвел çуттипе усă курма чăрмантараççĕ. Çаксемпе пĕрлех çумкурăксем авăн çапнă çĕрте, çапнă тырпула тасатнă чухне пысăк чăрмав кӳреççĕ, вĕсам тырпул тухăçлăхне тата унăн пахалăхне чакараççĕ.

Çумкурăксем кирек мĕнле çанталăк тăрсан та шăтса тухса, хунаса ӳсме пултараççĕ. Вĕсен вăррисем темиçе çул хушши тăпра айĕнче выртсан та, хăйсен шăтас пултарулăхне çухатмаççĕ. Хăшпĕр çумкурăксем питĕ хăвăрт тата йышлăн хунаççĕ. Пĕр йышши çумкурăк икĕ пине яхăн пĕрчĕ (вăрă) парать пулсан, тепĕр йышши вăра темиçешер пин, тепĕр чухне çĕршер пин пĕрчĕ парать. Сăмахран, пухра текен çумкурăк 2500 пĕрчĕ, кăвак тĕслĕ утмăл-турат 7 пин пĕрчĕ таран, сарă пиçен 19 пин, хĕрлĕ хăмăр тĕслĕ пиçен 25 пин, пастушья сумка текен çумкурăк 73 пин, мăян 100 пин, симентей çумкурăкĕ 700 пин пĕрчĕ парать. Паллах ĕнтĕ, çумкурăксен вăррисем çакнашкал тухăçлă пулни вĕсене хăвăрт хунама май парать.

Нумай çумкурăксен вăррисем çăмăллăнах урăх çĕре саланма пултараççĕ. Çумкурăксен вăррисене кайăксем, выльăхсем хăйсемпе пĕрле тата шывсем юхтарса, çавнашкалах çил вĕçтерсе урăх вырăна илсе каяççĕ. Çакнашкал майсемпе сарăлаççĕ çумкурăксен вăррисем.

Çумкурăксенчен паллăраххисем тăватă группăна уйăралаççĕ:

а) Однодвулетки текен çумкурăксем. Вĕсем вăрлăхран (пĕрчĕрен) шăтса тухса хунаççĕ (кăвак тĕслĕ утмăл-турат, антра çарăк, хир сĕлли, гречишка вьюкковая, мăян, полевая сокорка, ярутка).

б) Корнеотпрысковые текен çумкурăксем. Вĕсем хăйсен тымарĕсем тăрăх хунаççĕ (кăвак тĕслĕ пиçен, сарă тĕслĕ пиçен, сĕт курăкĕ, молокан, кăшкарути, йыт пырши).

в) Корневищнăй текен çумкурăксем. Вĕсем хăйсен тымарĕсем е тунисем тăрăх хунаççĕ (шурути, шăлан).

г) Паразитнăй текен çумкурăксем. Вĕсем ытти ӳсен-тăрансем çинче хунаççĕ, вĕсен сĕткенĕпе пурăнаççĕ (вĕлтрен уки, еркĕн).

Пирĕн уйхирсенче çумкурăксене пĕтерме пур условисем те çителĕклĕ. Пирĕн социализмлă çĕрĕçĕ пĕтĕм тĕнчипе чи шултра çĕрĕçĕ пулса тăрать. Мĕнпур çĕр лаптăкĕнчен 99 процентне совхозсемпе колхозсем ĕçлесе тăраççĕ. Мĕнпур çĕре колхозсем çумне тӳлевсĕр, ĕмĕрлĕхех усă курма çирĕплетсе панă.

Партипе правительство обществăллă çĕрсене салатса пĕтересрен сыхлаççĕ, çĕрпе лайăхрах усă курма колхозсене тата колхозниксене пысăккăн пулăшаççĕ. Халăхн вăхăтра пирĕн ялхуçалăхĕ сложнăй машинăсемпе хĕçпăшалланнă. Çав машинăсемпе ĕçлеме кадрсем те çителĕклĕ пирĕн.

Калас пулать, коллективизаци пуçланиччен хресченсен анисенче çумкурăксем хуçа пулнă. Йăрансем пулни тата ялхуçалăх машинисем çителĕксĕррине пула çумкурăксене пĕтерме май килмен. Ун чухне уйхирсенче 318 тĕслĕ, вăл шутран нумай çул хушши ӳсекенсем 193 тĕслĕ, пĕр çул хушши ӳсекенсем 125 тĕслĕ çумкурăк пулнă.

Вăйлă тырпул мастерĕсем кашни гектартан 60 — 80 центнер тырă туса илеççĕ. Çакăн чухлĕ тухăçлă тырпул туса илес тесе ялхуçалăхĕнче малта пыракансем наукăн мĕнпур даннăйĕсемпе тата агротехникăпа туллин усă кураççĕ.

Ефремовла звеносем тĕрлĕрен ĕçлеççĕ. Вĕсем тăпрана тĕплĕн тата пысăк пахалăхпа сухаласа çемçетеççĕ, тăпрана тислĕк, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, минераллă удобренисем йышлăн тăкса çемçетеççĕ, тĕрĕс нормăпа акаççĕ, калчасене лайăх пăхса çитĕнтереççĕ. Калчасене апат параççĕ тата вĕсене тăтăшах çумкурăксенчен тасатса тăраççĕ.

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри Е. Ашанина звени агротехникăна яланах вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан 58 центнер сĕлĕ туса илнĕ.

Пирĕн республикăри уйхирсенче çумкурăксене сăнаса вĕренес тĕлĕшпе ĕçленĕ экспедици кăтартса панă тăрăх, колхозсен уйхирĕсенче çумкурăксен йышĕ чакса пырать. Ăна çакă аван кăтартса парать. 1930 çулта 318 тĕслĕ çумкурăк пулнă пулсан, 1938 çулта вĕсем 159 тĕслĕ юлнă. 1938 çултанпа, паллах, вĕсен хисепĕ тата чылай чакнă.

Çумкурăксене тĕп тăвас тесен тĕрĕс пусуçаврăнăшĕ тăрăх ĕçлемелле, çĕртме сухисене лайăх пăхса тăмалла, вăрлăхсене тасатса акмалла, йăрансем çинчи тата калчасем çинчи çумкурăксене шăтнă пеккисене çумласах тăмалла.

Çĕртме сухине тарăн сухалани тата кайран лущени туни—çумкурăксене пĕтермелли майсенчен пĕри.

Агротехника правилисене пăхăнса ĕçленипе кăна уйхирсенчи çумкурăксене пĕтерме пулать. Халĕ чылай колхозсенче калчасем çинче çумкурăксем нумай. Вĕсене хăвăртрах пĕтерсе пымалла.

Агроном **А. ЛЬВОВА.**

Комсодсен ĕçне лайăхлатмалла

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине пухас ĕç лайăхланса пырать. «Трактор» колхоз членĕсем подписка укçине пĕтĕмпех парса татса, заем облигацийĕсене алла илчĕç.

Урмаелĕнчи «Янга Турмыш» колхоз членĕсем пĕр çын пек пулса çĕнĕ заема 9.070 тенкĕлĕх çырăнса илнĕччĕ. Пĕянхи куна пур колхозниксем те заем укçине парса татрĕç. Кунта та колхозниксене облигацисене валеçсе панă. МТС тракторисчĕсем те облигацисене алла илчĕç. Вĕсем хушшинче çĕнĕ заем 11.260 тенкĕлĕх сарăлнă.

Çакна палăртса хăварни кирлĕ: хăшпĕр ялсоветсем заема вырнаçтарас ĕçре çитĕнӳсем тунипе лăпланса ларчĕç. Сăмахран, Мăрат ялсоветĕнче заем 18.810 тенкĕлĕх сарăлнă, анчах подписка укçине мĕнпурĕ те 845 тенкĕ кăна пухнă.

Комсомольски ялсоветĕнче те ĕçсем çавнашкалах тăраççĕ. Кунти ĕçсыннисем çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çырăнса илчĕç. Пĕлтĕр заем çырăнса илес ĕçе 433 çын хутшăннă, подписка сумми 12.680 тенкĕ пулнă. Кăçалхи çĕнĕ заема 556 çын 25.055 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. Анчах заем укçине пухас ĕçе тивĕçлипе организацилемен.

Ялсовет исполкомĕсем комсодсене тата заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсене çителĕклĕ пулăшмаççĕ. Хăшпĕр çĕрте политикăллă-массăллă ĕçе сӳрĕклетрĕç. **М. ЯКОВЛЕВ.**



Ачасен 1-мĕш №-лĕ садĕнче. **Укерчĕк çинче:** вăйăсем хыççăн кăнтăрлахи апата тавăрнаççĕ. (Шупашкар хули).

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Лермонтов ячĕпе—вечерсем, лекцисем, выставкăсем

Столицăри предприятисен обществăллă организацийĕсем, культура дворецĕсемпе парксем вырăссен аслă поэчĕ М. Ю. Лермонтов вилнĕренпе 100 çул тултарнине паллă тума хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Сталин ячĕпе тăракан автозаводăн культура дворецĕ аслă поэтăн пурнăçĕпе творчестви çинчен вулакансен районри конференцине ирттерме хатĕрленет.

Июнĕн 28-мĕшĕнче учителĕн Мускав хулипе облаçĕнчи çурчĕ столицăри вăтам шкулсен преподавателĕсем валли Лермонтов вилнĕренпе 100 çул тултарнă ятпа вечер организацилет.

Культурăпа канун Горький ячĕпе тăракан центральнăй паркĕ июнĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа Лермонтов эрнине ирттерет.

Художествăллă самодеятельноçĕн Мускаври çурчĕ паркпа пĕрле Лермонтов произведенийĕсене чи лайăх вуласа паракансен конкурсне ирттерет.

Измаил облаçĕнчи предприятисенчи производствăллă çĕкленӳ

Измаил облаçĕнчи ĕççыннисем облаçра совет влаçĕ туса хунăранпа çулталăк тултарнă куна производствăри çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Предприятисенче калама çук пысăк производствăллă çĕкленӳ. Измаилри пулă заводĕнчи рабочисем стахановла вахтăна тăнă. Завод çурçул программине тултарса пырать.

Татарбунарти пусма фабрики те çурçул планне тултарса пырать. Совет влаçĕ туса хунăранпа фабрика продукци кăларассине нумай ӳстернĕ.

Тырпулсене пухас ĕç

Кăнтăр Казахстанра тырпулсене пухса кĕртес ĕç кашни кун ытларах та ытларах сарăлса пырать.

Пахта-Арал районĕнче 9 колхоз тырпул пухса пĕтернĕ, тĕштырă тăратмалли плана тултарнă, МТС тунă ĕçсемшĕн натуроплатăна пĕтĕмĕшпех парса татнă. Арыс районĕнчи «Полезный труд» колхоз-миллионер июнĕн 17-мĕшĕнче çĕнĕ тырă тиенĕ привайхи хĕрлĕ обоза — 23 лава заготпункта кăларса янă. Тулли мар сведенисем тăрăх, июнĕн 15-мĕш тĕлне облаçра 10.507 гектар çинчи тĕштырăна вырса пухнă.

Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем

Еççынни депутачĕсен ырăнти Совечĕсене суйласа хăварнăранпа Первомайски райсовечĕ хăйĕн депутачĕсемпе мĕнпурĕ те пĕр канашлу кăна туса ирттернĕ. Çак канашлура ырăнти советсен ĕçне лайăхлатасси çинчен тата ялсоветсемпе райсовет депутачĕсен практикăллă задачисем çинчен сӳтсе явнă пулнă. Анчах, ялсоветсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе конкретлă решени йышăнас вырăнне «докладра кăтартса панисемпе пренире тухса каланисене пĕтĕмĕшпе йышăнас», тенипех иртсе кайнă. Паллах, çакăн пек «решени» ялсоветсен ĕçне лайăхлатма пулăшни пулмасть.

Райсоветăн хăшпĕр депутачĕсем хăйсен округĕсенче питĕ сахал пулаççĕ, çавăн пекех, сесси ларăвĕсене те йĕркеллĕ çӳремеççĕ. Клавдия Ястребова райсовет сессинче пĕрре те пулман. Вырăнти промышленность ыйтăвĕпе ĕçлекен яланлăх комисси председателĕ Ковалевский юлташ та ĕçе хутшăнмасть, вăл комисси членĕсене те пĕлмест. Çакăн пек тĕслĕхсем татах та пур.

Райсовет депутачĕ Илья Макаров хăйĕн округĕнчи суйлавçăсемпе яланах çыхăну тытать, суйлавçăсем хушшинче тĕрлĕ ыйтусем тăрăх калаçусем туса ирттерет. Райсоветăн культурăпа сутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комисси председателĕ пулнă май, шкулсемпе вулав çурчĕсен тата библиотекăсен ĕçĕпе кулленех интересленет. Макаров юлташ пулăшнипе, кăçал колхоз членĕсем çураки ĕçĕсене вăхăтра туса хăварнă. Библиотека валли чылай çĕнĕ кĕнекесем туянса панă.

Сигач ялсовечĕ районра малта пыракан ялсоветсенчен пĕри шутланать. Ялсовет председателĕ Ф. Павлов юлташ тăрăшса ĕçлет. Ялсовет сессийĕнче ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсенчен тухса тăракан ыйтусене, вырăнти промышленноçа аталантарса пырасси, ял хушшинче тасалăхпа йĕркелĕх туса хурасси çинчен сӳтсе яваççĕ. 1941 çулти апрель уйăхĕнче пулнă сессинче ял благоустройствийĕ çинчен сӳтсе явнă. Сесси çак ыйту тăрăх конкретлă решени йышăнса хăварнă. Халĕ пур депутатсем те сесси йышăнса хăварнă решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Урамсемпе кил хушшисене таса тытса усраççĕ, йывăçсем те нумай лартнă.

Нăрваш-Шихаль ялсовечĕ те активпа тачă çыхăнса ĕçлет. Практикăллă ыйтусене сӳтсе явнă чухне яланах учительсене, врачсене, агрономсене, хозяйственниксене, суту-илӳ работникĕсене тата ытти çынсене чĕнеççĕ. Çак специалистсем ялсовет ĕçне лайăхлатас ĕçре кулленех пысăк пулăшу параççĕ.

Ĕççынни депутачĕсен вырăнти советсене райсоветсем енчен ертсе тата пулăшса пырасси пур районсенче те çителĕклĕ мар-ха. Елчĕк райсовечĕ вырăнти советсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе сахалтарах интересленет. 1941 çула кĕнĕренпе райсовет ларăвĕнче пурĕ 318 ыйту сӳтсе явнă пулин те, ялсоветсен ĕçĕсемпе, ялсен благоустройстви çинчен пĕр ыйту та сӳтсе явман. Райсовет депутачĕсем те хăйсен обязанноçĕсене тӳррĕн пурнăçа кĕртсе пымаççĕ, суйлавçăсем умĕнче хăйсен ĕçĕсем çинчен отчет туса памаççĕ. Çак çитменлĕхе Елчĕк райсовечĕн хăвăртрах пĕтермелле. Ĕççынни депутачĕсене ĕçе активлăрах явăçтарса пымалла

Вырăнти советсем умĕнче халь пысăк ĕçсем тăраççĕ. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Вырăнти чĕртавартан кулленхи кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртме конкретлă ĕçсем тумалла. Хуласемпе ялсен благоустройстви енĕпе те çине тăрсах ĕçлени кирлĕ. Резолюцисем сахалтарах çырмалла, ĕçне ытларах тумалла. Çавăн пекех, шкулсене халех çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес, тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленес ыйтусемпе ĕçлемелле.

Ĕççынни депутачĕсем хăйсем совет халăхĕн тарçи пулса тăнине манма юрамасть.

М. ПРОХОРОВ.

Вак çулсем çинче

ИШЛЕЙ. Шетмĕпуç ялсовечĕ çулйĕрсене юсас, чул хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе малти вырăнта пырать. «Çĕнĕ хунав» колхозăн çулйĕр бригадине 64 çулхи старик Роман Иванов юлташ ертсе пырать. Вăл 3 çул хушши ĕнтĕ бригадир пулса ĕçлет. Р. Иванов юлташ бригади пăхса тăракан çулйĕрсем яланах шăтăк-лутăкçăр, тип-тикĕс выртаççĕ. Ял хушшинчи кĕперсене те юсарĕ.

Анчах «Красный борец» колхоз участокĕнче 2 çул хушши нимĕн те юсаман. Сырмари кĕпере çурхи шыв ишĕлтерсе ватса кайнă. Унăн урлă лашапа каçса çӳреме çук. Çавна пула Шупашкара каймалла пулсан 10—12 километр тавра кайма лекет. **Ф. ТУРХАНКАЙ.**

Ялсовет сессийĕнче

ШАХАСАН. Çак иртнĕ кунсенче ĕççынни депутачĕсен Çĕнĕ Мамли ялсоветĕн сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси государство умĕнчи обязательствăсене тултарас ĕç ялсоветĕнче мĕнле тăни çинчен сӳтсе яврĕ. Сесси çакна палăртрĕ: уйрăм депутатсем хăйсен округĕсенчи колхозниксене килĕсем тата единоличниксен хуçалăхĕсене государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта мĕнле тăратнипе сахал интересленнĕ. Çĕнĕ-Мамли ялсовечĕ иккĕмĕш квартала аш-какай тăратмалли плана—75 процент тултарнă.

Ялсовета тăватă колхоз. Вĕсенчен Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз государство умĕнчи обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе малта пырать. Кунта колхоз халь государствăна аш-какай, сĕт-çу тата çăмарта парса татнă.

Сесси иккĕмĕш ыйту тăрăх укçа-тенкĕ пухасси çинчен сӳтсе яврĕ. Укçа-тенкĕ пухас ĕç ялсоветĕнче начарах мар пулса пырать. Иккĕмĕш квартала укçа-тенкĕ пухмалли плана 198 процент тултарнă. Çапах та ял хушшинче недоимкăсем пур-ха.

Сесси заемшăн укça пухассине вăйлатма тата недоимкăсене çак кунсенчех пухса çитерме кирлине кăтартса хăварчĕ.

А. КИРИЛЛОВ.

Çум çумлаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чечейкассинчи «Аниш» колхоз çак кунсенче клевер çинчи çумкурăксене çумлама тухрĕ. Малтанхи кун Владимиров юлташ бригади 6 гектар çумларĕ. Çум çумланă çĕрте бригадăпа бригада, звенопа звено ăмăртса ĕçлеççĕ.

В. ГРИГОРЬЕВ.

Финляндири политикăллă шухăшсем çинчен Швецири хаçат мĕн пĕлтерет

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 22-мĕш. (ТАСС). Швецири «Арбетарен» хаçат Финляндири политикăллă шухăшсем çинчен калакан статьяра çапла çырать: «Пире пĕрмаях: Финляндире халăх пĕрлĕхлĕ пурăнать, тесе ĕнентерчĕç. Анчах та Финляндире социаллă тата политикăллă пĕрлĕх халăхи пек нихăçан та вăйлă пулман. Обществăллă тĕрлĕрен çынсем хушшинче кăмăлсăрлăх çав тери пысăк. Çакна Финляндири социал-демократла «Арбетарбладет» хаçат редакторĕ А. Виртанен хăйĕн ĕçне тума пăрахни те кăтартать. Çак кунсенче вăл хăй ĕçне тума пăрахса, çапла каласа панă: хаçат ирĕклĕ пулать, журналист профессине çавăн чухне çеç тума тивĕçлĕ тесе шутлатăп. Çакăн пек тискер вăхăтра, тесе каланă Виртанен, Финляндире журналист пулма çăмăл мар. Эпир тĕлĕнмелле ĕçсене курнă, анчах та эпир вĕсем çинчен каламашкăн, çырма та пултарайман». «Виртанен—тесе çырать «Арбетарен» хаçат малалла,—Финляндири националистла пропагандăна тата «пиллĕкмĕш колонна» ĕçĕсене хирĕç мерăсем йышăнма çине тăрса ыйтнă. Нумаях пулмасть вăл çапла пĕлтернĕ: социал-демократла партин тĕп органĕ—«Суомен сосиалидемокраатти» хаçат информацийĕ националистла çăвăрпа витĕнсе тăрать. Социал-демократла партипе правительство руководствин политикине пĕр Виртанен кăна хирĕç тăмасть. Çавăн пекех вăл политика çине Финляндири ĕççыннисен йышлă массисем те тарăхаççĕ. Анчах та хаçатсем çавăн çинчен нимĕн те шарламаççĕ».

Германи влаçĕсем Норвегири обществăллă деятельсене хирĕç тăвакан ĕçсем

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 22-мĕш (ТАСС). Швецири хаçатсем Осло хулинче Норвегири паллă деятельсене чылай арестлени çинчен пĕлтереççĕ. Арестленисен шутĕнче: Норвегири профсоюзсен руководителĕ Буланд, врачсен пĕрлешĕвĕн генеральнăй секретарĕ Бернер, коммуналлă рабочисен профсоюзĕн правлени председателĕ Генриксен, Норвегири паллă писатель Эверланд т. ыт. тисем те. Пурĕ 60 çын ытла арестленĕ, тесе кăтартса параççĕ Швецири хаçатсем. Вĕсене Норвегири 44 обществăллă организаци Норвегири национал-социалистла партипе тата Германи оккупациллĕ влаçĕсен террорла ĕçĕсене хирĕç протест тунăшăн арестленĕ. Арестленисенчен нумайĕшĕ çав протест çине алă пуснă, çав протеста Германи влаçĕсене ярса панă.

Çурçĕр Африка çинчен тунă экономикăллă килĕшӳ пăрахăçа кăларни

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 22-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Касабланкăна (Марокко) Америка вице-консулĕсем сахалтан та вунă çын пырса çитнĕ, вĕсене Çурçĕр Африкăри тĕрлĕ пунктсене кăларса янă. Анчах та вĕсем хăйсен функцийĕсене пурнăçа кĕртме пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен США-па Франци хушшинчи разногласисене пула Çурçĕр Африка çинчен тунă экономикăллă килĕшӳ пăрахăçа кăларнă. Çав килĕшӳ тăрăх Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Францин секвестр хунă фончĕсенчен тракторсем валли горючи тата Çурçĕр Африка валли ытти таварсем туянма 15 миллион доллар илме ирĕк памалла пулнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

БИБЛИОГРАФИ

„Илемлĕ литература“

Альманахăн уйрăм кĕнекисем пирки ичетре пайтах калаçкаларĕç. Вăл татьясем пуринчен ытла альманахăн итменлĕхĕсене кăтартса параççĕ. Ку, аллах, кирлĕ ĕç. Анчах ситменлĕхсене пула унти паха япаласене асăрхаас хăварни тĕрĕс пулмаĕ пулĕччĕ. Лашки вăхăтра пичетленсе тухнă икĕ омĕрĕ (1-мĕшпе 5-мĕш кĕнекесене) пăхсан, эпир альманахăн ĕçĕнче туй паха япаласем, вулакансене сапармалли произведенисем пуррине ратпăр.

«Илемлĕ литература» альманахăн мĕн кĕнекинче пуринчен ытла чăваш писательсен (Е. Еллиев, С. Шавлы, Алексей Медведев, Никита Волков, ихăн Петĕркки т. ыт. те) произведенисем пичетленсе тухнă. Çавнашкаăх вĕсем жанр енчен те тĕрлĕрен: унта проза та, поэзи те, драматургипроизведенийĕ те, теориллĕ статьясем те, библиографи те пур.

Кĕнеке Стихван Шавлы çырнă «Çиçĕм çиçет» ятлă поэмăпа, тĕрĕсрехĕн каласан—сăвăллă романăн 1-мĕш пайĕпе уçăлать. Произведенири ĕçсем тĕнче империализмлă пĕрремĕш вăрçă условийĕсенче, Пĕкĕлмене лексем хушшинчи Хурамал ялĕнче пулса иртеççĕ.

Хурамал ялĕнче «хĕрсĕр кашкăр»—т Мулентей хуçа пулса пурăнать. ăн аяк кĕскен те питĕ витĕмлĕ сăлексем кăтартса панă:

«Асти Мулентее ситме?
Ун тăлăп тилĕ тирлĕ,
çавăр патне çитет часах.»

Мулентей, вăрă-турах пек, никама шанмасть: çынсене те, хăй çемьине те, саманана та. Унăн пĕр тĕллев, пĕр закон: тапта пурне те, пуй, çарат.

Яла çĕнĕ учитель, Тарас Константинович Краснов килет.

«Куланайлă кĕр те куркаланă вăл,
Сар хĕвелсĕр кун та куркаланă вăл...
Мĕскĕн ӳснĕ ачаран.»

Вулăсран «сыхлаяй» текен хут килсен, пуянсем учитель тавра шăршласа çӳреме тытăнаççĕ... Тĕлĕнмелле хаяр хĕсĕрлĕ пулмасса каять. Учителе Чӳлпĕр тĕрминчи пĕччен камерăна хупаççĕ.

«Çиçĕм çиçет» поэмăна хумханулла та вĕри кăмăлпа çырнă.

Поэмăна уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларичен автор унти хăшпĕр çитменлĕхсем çине те кăтартса хăварас килет. Чи малтанах, пур образсене те тума çитерейменни. Мулентей ывăлĕсен сăнĕсем вуçех те асра юлмаççĕ. Наçса та çавнашкалах. Альли образĕ те, пирĕн шутпа, чылай ĕçлемелле-ха. Унăн образĕпе пĕр-пĕринпе пиешле те килĕшмен хирĕçсем нумай. Альли (Мулентей хĕрĕ) Тараса юратнипе тăван килĕнчен пăрахса тухса каять, монастырьте пурăнать, ыйткаласа çӳрес патне çитет.

Тараспа тĕрмере юлашки хут курнăçнă чухне Альли антăхса кайса калаçать:

«Тарас, Тарас!
Епле сана манас?
Шăппанкăн çĕрĕ те кĕлленĕ,
Хĕресĕм ука чалăшса.
Ем-ешĕл кĕтрен илемлĕн
Шăтса хăпарĕ вут çапса.
Кĕр çитĕ те — вăл сарăхĕ салхуллăн,
Çухатĕ хăй кăварлăхне...
Çапах та чаштăртатĕ хурлăн-хурлăн,
Вăл асăнĕ Тарас ятне.»

Тараса юратнă пирки çакăн чухлĕ асап, хĕнхур, мăшкăл тӳснĕ Альли ăна ĕмĕр-ĕмĕр манассăн туйăнмасть. Анчах... уçар-ха тепĕр страница:

«Альли (хăйсен тарçине — Митрахвана):
Нушамăра эп сирĕп, хусăп.
Чун сунтăхне пĕр саншăн уçăп,
Ун ылттăнне умна сапалăп.
Сана валли эп ывăлсем суратăп.»

Митрахван вĕсен килне çунтарнине пĕлсен —

«Альли чакать.
Вăл Митрахван çине
Çĕçен хирсен кушакĕ пек
Сиксе ӳкет.»

Ик-виç строка урлă:

«Альли (Митрахвана):
Ман ылттăнăм,
Кĕпер хывар,
Кун-çул пуçлар!»

Чĕлхе енчен те поэмăра кăлтăксем чылай.

Çак ситменлĕхсене пĕтерсен «Çиçĕм çиçет» поэма паха та кирлĕ произведени пулса тăрĕччĕ.

Проза пайĕнче альманахра Е. Еллиевăн «Ломоносов» ятлă калавĕ пичетленнĕ. Е. Еллиев хăй умне, яланхи пекех, пысăк та интереслĕ задача тăратса, ăна питĕ те ăнăçлăн татса панă. М. А. Ломоносов, паллă мар чăваш каччи, хăй-турат, Октябрьти Социализмла Аслă революци вырăнĕпе ӳсе çитĕнсе, чаплă профессор-металлург пулса тăрать.

Калаври тепĕр герой — Румбин ĕçе кĕме отзывсем, протекци пухни кулăшла та айвана ĕç пек туйăнать.

«Пирĕн инженерсем, писательсем, артистсем, художниксем, поэтсем, педагогсем интеллигенци ретне хăйсен пултарулăхĕ тăрăх кĕрсе пыраççĕ. Пирĕн интеллигенци ретне халăхăн чи активлă, чи пултаруллă, чи квалификациллĕ çыннисем кĕрсе пыраççĕ.» (М. И. Калинин). Çакăн çинчен каласа панă «Ломоносов» калавра.

А. Медведев та хăйĕн «Юлташ йĕрĕпе» ятлă калавĕнче пысăк ыйтăва — çĕршыва тăшмансенчен сыхлас ыйтăва хускатнă. Карачăмăн ăп-тиккинчи шухăшĕсем урлă автор хăйĕн геройне чылаях витĕмлĕн те ĕненмелле тасса панă.

Альманахра раснах пурне те савăнтаракан пай вăл — фольклор пайĕ. Фольклор произведенийĕсене редакци питĕ пысăк вырăн парать. Юлашки вăхăтра тухнă номерсенче чăваш халăх авалхи юррисем («Сарă кун çĕршывĕре» ятлă юмах, Кашкăр Микули çырса панă «Чăвашсен туй йĕркисемпе туй юррисем» (ку материал вулакансемшĕн те, писательсемшĕн те калама çук паха япала пулса тăрать) тата И. Тукташ «Чăвашсен» ятлă статьи пичетленсе тухрĕ.

Альманахăн ку кĕнекинче И. Тукташăн «Совет саманинчи чăваш фольклорĕ» ятлă теориллĕ пысăк статйи пичетленнĕ. Ку статьи чăвашсен Октябрь хыççăнхи фольклорне тĕпчесе çырнă пĕрремĕш ĕç. Монографире хăшпĕр ыйтусем пур пулин те, пĕтĕмĕшле илсен, вăл тăван халăх историйĕпе интересленекен кашни вулаканшăн калама çук пысăк пособи пулса тăрĕ.

Аркадий Эсхелĕн «Критика пирки» текен статйи критикăпа библиографи фронтĕнче ĕçлени пăтраштаруçсене тăрă шыв çине кăларать, чылай писательсен творчествине пăхса тухать.

«Илемлĕ литература» альманах ӳссе, жанрпа тематика тĕлĕшĕнчен пуянланса пырать. Вăл кашни шкултах, кашни клубра, кашни вулав çуртĕнче, колхозниксен килĕсенче хăйне пулмалла.

Ф. АФАНАСЬЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2517 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293. Ф. 6. 58 84 п. л.